ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

38 (4400) №, 2014, авăн, 18 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## «Манăн юлташсем – чи лайăххисем»

**Нумай ачаллă çемьере ситĕнекен Рита Егоровăшăн çуллахи каникул ăнăçлă иртрĕ. Кăçал та вăл «Космонавт» лагерьте канса çĕнĕ юлташсемпе паллашрĕ. Халĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ те пушă вăхăчĕ сахалтарах. Уроксем пурнăçламалла, килте аслисене пулăшмалла. Апла пулин те тусĕсемпе интернет урлă час-час çыхăнать. Телефонпа калаçма та ӳркенмест. Вĕсен пурнăçĕпе кăсăкланать. Уйрăмах Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкассинчи Кристина Петровăпа сăмах çăмхине сӳтме кăмăллать вăл.**



– Эпĕ ку лагерьте тăваттăмĕш хут пултăм. Кристинăпа вара кăçал паллашрăм. Лайăх хĕр ача вăл. Таракат. Кăмăлĕ те ырă. Йывăр вăхăтра кирек кама та пулăшма пултарасса чĕрепе туятăп. Тен, пурăна киле пĕр-пĕрин патне хăнана çӳрĕпĕр-ха, – ĕмĕтленет Канаш районĕнчи Ухман шкулĕн маттур вĕренекенĕ.

Пиллĕкĕн пĕр тăван вĕсем. Рита вара аппăшĕпе пиччĕшĕсене çав тери юрататъ.

– Туслă пурăнатпăр эпир. Атте-анне сăмахĕнчен пĕри те иртмест. Люда аппа шкултан вĕренсе тухнă ĕнтĕ, юратнă профессие алла илес тесе тăрăшать халĕ. Юра пиччем те Шупашкарта. Даниил, Егор тата эпĕ паянхи кун шкул сукмакне такăрлататпăр. Пиччемсем пĕри 9-мĕш, тепри 8-мĕш, эпĕ вара 6-мĕш классенче пĕлӳ илетпĕр. Пурте тăрăшса вĕренетпĕр, аттепе-аннене «4» тата «5» паллăсем илсе хавхалантаратпăр. Ара, юратнă çыннăмсен пит-куçĕнче яланах йăл-кулă çиçсен пире те кăмăллă-çке, – тет Рита хăпартланса та хавхаланса.

...Акă паян шкултан килсен уроксем тума сĕтел хушшине вырнаçрĕ вăл. Задача шутланă чухне сасартăках ручкине хучĕ. Çӳлĕк çинчен пукане илсе юнашар лартрĕ.

– Настенька, малашне санпа выляма вăхăт та хĕсĕкрех пулĕ. Уншăн ан çиллен. Ĕнтĕ хам та пысăклантăм. Атте-аннене тĕрлĕ ĕçре пулăшасси – манăн тивĕç пулĕ. Санпа вара каç енне çеç пуплесе ларма пултарăп. Тен, тепĕр чухне пĕрле те çывăрăпăр. Ку ĕнтĕ вăл йăлтах пушă вăхăтпа çыхăннă, – тесе пуканене хăй çумне чăмăртаса чуп туса илчĕ.

***Элиза ВАЛАНС.***

Канаш районĕ,
Ухман.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Маттурсем!

## «Кăçал та çитĕнӳ тăвасчĕ»



Вĕренӳ çулĕ пуçланнă кăна-ха, тăххăрмĕш класра вĕренекен Ирина Алексеева чылай предметпа «5» паллăсем илчĕ.

– Шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухас ĕмĕт тахçанах канăç памасть. Çавăнпа кирек хăш предмет та манăн йывăррисен шутĕнче пулмалла мар. Акăлчан чĕлхине уйрăмах килĕштеретĕп. Ахальтен мар паллах. Куçарусă профессине алла илсе ют çĕр-шывсене çитсе курас килет. Писательсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе паллашма та кăмăллатăп. Тĕрлĕ литература вуласси – чун иленĕçĕ, – тет Ирина.

Чăваш чĕлхи урокĕсене те чăтăмсăррăн кĕтет хастар пике. Ара, Инна Михайловна Егорова кашни уроках кăсăклă та курăмлă иртерет-çке.

– Инна Михайловна пулăшса хавхалантарнăран пĕлтĕр те, виçĕм çул та вырăс шкулĕсен хушшинче иртернĕ чăваш чĕлхи олимпиадинче çĕнтерӳçĕсен йышĕнче пултăм. Кăçал та çавнашкал ӳсĕмсем тăвас ĕмĕтлĕ-ха юратнă вĕрентекенĕмпе,– тет хастар пике.

Вăрнар районĕ,
Вăрнарти 1-мĕш шкул.

## Пулас артистка



Пианино умĕнче ларакан хĕр ачан чĕринче кайăк вĕçсе иртнĕ пек çĕнĕ туйăм вĕлтлетсе илчĕ. Ксюша çавна тăрăшсах музыка чĕлхипе каласа пама тăрăшрĕ. Çепĕççĕн тухакан кĕвве Алла йăмăкĕпе Егор шăллĕ те тимлесех итлерĕç.

– Хăватлă! Аппа, манăн та сан пекех пултаруллă пулас килет, – терĕ кайран Алла ун патне пырса.

– Мана та килĕшрĕ ку кĕвĕ, – чăр! пăхрĕ Егор та аппăшĕ çине.

...Музыка шкулне çӳрекен Ксюша пушă вăхăтра пианино умне ларать. Эх, чунĕ килениченех кĕвĕ калать вара! Ташша та ăста. Шкулта иртекен мероприятисене хутшăнса куракана пултарулăхĕпе савăнтарать. Юрри-ташши килĕшнине пĕлтерсе тăвăллăн алă çупни пушшех хавхалантарать ăна.

– Пулас артистка, – тет хăшĕ-пĕри çунатлантарса.

Спорт та уншăн ют мар. Тус-юлташĕсемпе, пĕрле вĕренекенсемпе баскетболла, пионерболла хаваспах вылять.

Кăсăклă кĕнеке вулама та хавас Ксюша Удовиченко. Уйрăмах юмахсемпе фантастикăна кăмăллать.

Канаш,
8-мĕш шкул.

## Спорта юратакан Андрей

– Спорт – маншăн чун киленĕçĕ, унсăр пурăнаймастăп, – тет Комсомольски районĕнчи 2-мĕш шкулта ăс пухакан Андрей Ефимов.



Юлташĕсемпе мечĕк хăваласси, шывра ишесси, баскетболла, волейболла вылясси – уншăн калама çук пысăк савăнăç. Кирек епле лавккара куç тĕлне мечĕк лексенех ĕмĕтре çарана вĕçтерет вăл. Паллах, футболла выляма.

– Спорт хул-çурăма çирĕплетнисĕр пусне, вăй-хăват та хушать. Вĕренӳре те ӳсĕмсем туса пыма пулăшнине чунпа туятăп эпĕ, – тет мал ĕмĕтлĕ Андрей.

Комсомольски районĕ,
Комсомольскинчи 2-мĕш шкул.

## Ырă чунлă пĕр тăвансем



Шкултан таврăннă чухне урамра хуçасăр кушак çурине курсан чунĕ хĕссе ыратрĕ Кристинăн.

– Пĕс-пĕс! Кил кунта, – чĕнчĕ пĕчĕкскере ачашшăн.

Лешĕ çакна кăна кĕтнĕ тейĕн, йăпăрт çеç ун патне чупса пычĕ те куçран пăхса мăрăлтатма тытăнчĕ. Хĕр ача ăна йăтса хăй çумне чăмăртаса ачашларĕ.

– Чим, паян кунĕпех апат çимен пулĕ. Сумкăра кукăль татăкĕ пурччĕ, çавăнпа хăналам-ха сана, – тесе кушак çурине çĕре ячĕ.

...Çут çанталăка, чĕрĕ чунсене çав тери юратать Кристина. Хуçалăхра йывăççемшĕн, хуçасăр йытă-кушаксемшĕн чунне ыраттарни пĕрре мар пулнă унăн. Паян та авă çавнашкал ӳкерчĕксем тĕл пулаççĕ. Тепĕр чух чăтаймасăр мăр-мăрсене киле те йăтса кĕрет.

– Катя йăмăкăм та мана хывнă. Вăл та çавăн пеккисене курсан хурланать. Хĕллесерен сырăша кайăксем валли апат хума манмасть, – тет Кристина.

Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ пĕр тăван Кристинăпа Катя Даниловăсем. Иккĕшĕ те тăван чĕлхене юратаççĕ.

– Ӳкерме юрататăп тата эпĕ. Уйрăмах çакăн пек кĕрхи çанталăка шурă хут çине куçарма кăмăллатăп. Сарă, хĕрлĕ, симĕс çулçăллă йывăççене сăрлама çав тери килĕшет. Ӳссен дизайнер пулатăпах, – çирĕплетет Кристина.

Етĕрне районĕ,
Пушкăрт шкулĕ.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан – Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОРШĂН
Л.ВАСИЛЬЕВА

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1525 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3528
Пичете авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Тăваттăмĕшсем – хастар авторсем



Ку шкулта пирĕн хастар автор нумай. Тăваттăмĕш класра вĕренекенсем «Тантăш» тесенех йăл кулăпа çиçеççĕ, куçĕсем телейлĕн çуталаççĕ. Юратнă хаçат парнелекен ырă туйăмсене епле пытарăн-ха? Хайсен пичетленнĕ кашни сăвви-калавне тĕплĕн упраççĕ вĕсем. Эпир хăнана килсен пире çав ĕçсен куравĕпе паллаштарчĕç. Чăнах та, мĕн тери кăмăллă иртеççĕ-çке çакнашкал тĕл пулусем.

Класс ертӳçи Надежда Александровна Алексеева ачасене хавхалантарма, çырас ĕçе явăçтарма пĕлет çав. Вĕсен кашни çитĕнĕвĕшĕн хăй те пĕрлех савăнать.

– Хăш чухне класра сăвă çырма пуçлатпăр та пĕр йĕркине эпĕ калатăп, теприне – ачасем. Çапла кăсăклану пуçланса каять. Çамрăксене питĕ аталантарас килет. Вĕсем пирĕн пуласлăх вĕт-ха, – тет маттур вĕрентекен.

Сăвă-калав çыракансем вара малашне татах йышланасса шанатпăр.

# Çĕр пин тĕрĕ тĕнчинче



Чăвашăн çĕр пин тĕрĕ пулнине Инна Павлова туххăмрах ĕнентерме хатĕр. Хăй те çак ĕçе чунтан парăннă-çке. «Тĕрĕ ĕлĕкхи çынсен пурнăçĕ çинчен хайĕн чĕлхипе каласа парать», – тет пир çинчи çыру вăрттăнлăхне Евгения Жачева вĕрентекенрен алла илнĕскер. Чăваш ялавне тĕрлесе вăл районта виççĕмĕш вырăна тухнă.

Пĕтĕм тĕнчери «Наци пуянлăхĕ-2014» конкурс иртессине пĕлсен Тавăшкасси шкулĕ унта хутшăнмасăр пултарайман. Маттур та хастар вĕренекенсене çак ĕçе епле илĕртмĕн-ха? Вуннăмĕш класс хĕрĕсем Инна Павловăпа Света Андрианова тӳрех шухăш тĕнчине ирĕке ярса «Киремет вырăнĕ» ăсталама тытăннă. Çак ĕçе курсан тĕлĕнсе пĕтерме çук: çыннисене те, çи-пуçне те, тĕррине те ăсталама пĕлнĕ-çке, тавралăхĕ чăн пекех курăнать, Киремет йывăççĕ пурне те хăйне пăхăнтарасшăн пек мăнаçланса ларать. Хăйсен пултарулăх ĕçне кăтартса хĕр ачасем республикăра пĕрремĕш вырăн йышăннă, пĕтĕм тĕнче шайĕнчи конкурсран вара иккĕмĕш степень лауреачĕ пулса таврăннă.

Инна наукăпа практика конференцийĕсенче те тăтăшах çĕнтерет. Тĕслĕхрен, «Чăваш наци радиовĕ – чун апачĕ» темăпа доклад хатĕрлесе иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Час-часах тарăн шухăша путаканскершĕн литература тĕнчи те ют мар. Сăвă-калав çырса чунне уçма кăмăллать вăл. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине халалланă «Йывăр кунсем» калавпа наукăпа практика конференцийĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă.

Пултаруллă хĕр ача вĕренӳре те маттур, дневникĕнче «5» паллă кăна курма пулать. Тăваттăмĕш çул вăл район пуçлăхĕн стипендине илсе тăрать. Çавăншăнах «Ылтăн ачасем» конкурсра «Ылтăн стипендиат» ятне илнĕ те. Класра староста вăл, ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче.

# Ылтăн чĕреллĕ Настя



Вуннăмĕш класри Настя Федорова «5» паллăпа çеç вĕренет. Çакăншăн тата ытти ĕçре те хастарлăх кăтартнăшăн вăл – район пуçлăхĕн стипендиачĕ.

Настя ӳкерме юратать. Тавралăха сăнланă чухне ăна çав илемлĕх хăйĕн чунĕнче те ешернĕн туйăнать. Этемпе çут çанталăк тачă çыхăнура тăни кунта та сисĕнет-çке. Хăйĕн ĕçĕсемпе хĕр ача тĕрлĕ шайри конкурса хутшăнать, республикăра та, Раççейре те палăрать.

«О, спорт, эсĕ – тăнăçлăх» республика конкурсĕнче çĕнтерсен унăн ӳкерчĕкне Раççей шайĕнче хак панă, Германие ярса пама тивĕçлисен шутне кĕртнĕ. «Манăн пĕчĕк тăван çĕр-шыв» республика тата Раççей конкурсĕнче мала тухнă вăл.

Настя «Туслăх хĕлхемĕ» фестивале тăтăшах хутшăнать. «Шевле» номинацире вăл çавăнтах уйăрса панă икĕ сехетре ӳкерчĕк хатĕрленĕ те иккĕмĕш вырăна тухнă.

Хитрелĕхе куракан çыннăн чунĕ те илемлĕ. Хĕр ача хăй хайлакан сăввисенче те çынсене черчен тавралăха юратма вĕрентет, кашнин чĕринче ырă туйăм вăратма тăрăшать.

Малтан Настя вĕренӳ кĕнекисене иллюстрацилекен пулма ĕмĕтленнĕ. Ара, ӳкерчĕкĕ ытла сахал пек туйăнать-çке унта. Тен, ӳнерçĕ çитмест? Вăхăт иртнĕ май вара шухăшĕ улшăннă.

– Манăн кĕçĕн классен вĕрентекенĕ е садикра ĕçлекен пулас килет. Ачасене мĕн пĕчĕкрен ырăлăха хăнăхтармалла-çке. Шăпах çак тĕллеве пурнăçлас шухăшлă эпĕ, – тет районти «Ылтăн ачасем» конкурсăн «Ылтăн чĕре» номинаци çĕнтерӳçи.

Ялти ватăсене те яланах пулăшма хатĕр вăл: шыв çĕклет, пӳртре тирпейлет, вутă купалать. Ватăсем кушăн питĕ савăнаççĕ, хĕр ачана кăмăллăн тав тăваççĕ, ыррине ытларах курма сунаççĕ. Пурнăçра хури-шуррине самай тӳснĕскерсем мĕнле йывăрлăх тӳссе ирттернине каласа паянхи кунпа савăнса пурăнма вĕрентеççĕ.

Çавăн пекех Настя предмет олимпиадисене хутшăнса çĕнтернĕшĕн «Ылтăн олимпăçă» ята та тивĕçнĕ. Ахальтен мар пултаруллă, ăслă та тăрăшуллă, ырă кăмăллă хĕр ачана район пуçлăхĕ С.Г. Артамонов Тав çырăвĕпе чысланă.

Çынра яланах ыррине курма хăнăхнă Настя, ăна чунне кура хаклать. Хĕр ачан кăмăлĕшĕн ашшĕ-амăшне тав тумалла, вĕсем хĕрне тивĕçлĕ воспитани парса ӳстереççĕ-çке. Сывăх çыннисен ăшă сăмахĕсем вара Настьăна малашне те ăнăçу хыççăн ăнăçу тума хавхалантараççĕ.

# «Пăшăрхантаракан ыйтусем пирки чуна уçас килет...»



«Наци пуянлăхĕ-2014» конкурса хутшăннă тепĕр маттур вĕренекен Света Андрианова çинчен те нумай ырă сăмах калама пулать. Питĕ маçтăр вăл, тăмран тем те пĕр ăсталать. Конкурс валли Кириметне те, çыннисене те йăвалаласа тунă-çке. Унсăр пуçне Света сăн ӳкерме юратать. Фотокружока çӳресе çак ĕçĕн тĕрлĕрен вăрттăнлăхне уçăмлатаканскер яланах çут çанталăка çывăхрах пулма, унăн илемлĕхне сăнаса «тытса» юлма тăрăшать.

Сăвă-калав та хайлать Света.

– Малтан чĕр чунсем çинчен ытларах çыраттăм. Халĕ вара пурнăçра пăшăрхантаракан ыйтусем пирки чуна уçас килет, – тет вăл.

Несĕлсем çинчен те чылай интересленет. Тавра курăмне пуянлатма вара асламăшĕпе кукамăшĕ пулăшаççĕ, йăхнесĕлĕсем çинчен мĕн пĕлнине каласа пăраççĕ.

Света медицина ĕçченĕ пулма ĕмĕтленет. Кукамăшĕ Светлана Михайловна Крылова – ЧР тава тивĕçлĕ медицина ĕçченĕ, пиччĕшĕ – çар фельдшерĕ. Çавăнпа та тăххăрмĕш класа хĕрлĕ аттестатпа пĕтернĕ маттур пике вуннăмĕшпе вун пĕрмĕш классене те ăнăçлă вĕçлесшĕн, шухăш-тĕллевне пурнăçа кĕртесшĕн. Ĕмĕте пурнăçлас тесен вара çирĕп кăмăл, ăнтăлу тата пурнăça юратни кирлĕ. Çакă Светăра йăлтах пур.

Çĕрпӳ районĕ, Тавăшкасси шкулĕ.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Кашни кунах ăмăрту



Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» 5-мĕш форума республикипех тăрăшса хатĕрленеççĕ. Шупашкарти Олег Беспалов ячĕллĕ 7-мĕш шкул вĕренекенĕсем те айккинче юлмаççĕ. Çавна май виççĕмĕшпе тăваттăмĕш, улттăмĕшпе çиччĕмĕш тата тăххăрмĕшпе вуннăмĕш классем интернетра «Шкул ачисем физкультурăпа спорта мĕнле йышăнаççĕ?» ыйтăма хуравларĕç. Никам та кăмăлсăр юлмарĕ.

Иртнĕ эрнере пиллĕкмĕш «а» тата «б», вуннăмĕш «п» тата вун пĕрмĕш «а» классем мини-футболла выляса тупăшрĕç. Пĕрремĕш класс вĕренекенĕсем çăмăл атлетика эстафетине тухрĕç. Кашниех çĕнтерÿ патне ăнтăлчĕ, анчах туслăха çитекенни пулмарĕ.

Саккăрмĕшпе тăххăрмĕш класс арçын ачисем баскетболла вылярĕç. Чи вăйлисем те чи çаврăнăçуллисем – саккăрмĕш «а» тата тăххăрмĕш «а» классем. Çак икĕ командăран пĕри çĕнтерсен вăл шкул чысне хула ăмăртăвĕнче хÿтĕлĕ.

Шкулта ташă уявĕ те иртрĕ. Ку та спорт тĕсĕ шутланать-çке. Тахçанах пĕлетпĕр, сăмахпа çеç мар, кĕлетке хусканăвĕпе те «калаçма» пулать.

«Хĕвеллĕ хула» студи ачасене хип-хоп ăсталăхне вĕрентрĕ. 3-5 классем кашни хусканăвне евĕрлеме тăрăшрĕç. Кун хыççăн черлидинг (ташă, гимнастика тата акробатика сĕмĕллĕ спорт тĕсĕ) конкурсĕн пĕрремĕш тапхăрĕ пуçланчĕ. Хаваслă ташă, кăшкăрса хавхалантармалли янăравлă сăмахсем – çакă йăлтах сцена çинче иртрĕ. Ачасене ашшĕ-амăшĕ тата микрорайонта пурăнакансем тăваллăн алă çупса саламларĕç.

*Яна ЗАЙЧЕНКО.*

# «Атăлçи спорт Олимпĕ» – Çĕнĕ Шупашкарта



Авăнăн 13-14-мĕшĕсенче Çĕнĕ Шупашкарта «Атăлçи спорт Олимпĕ» спартакиада иртрĕ. «Ачалăха тавăратпăр» проект пайĕ пулчĕ вăл. Ăна ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнă ачасене пулăшас, ача çуртĕнче çитĕнекенсене спортпа, культурăпа, ÿнерпе тата ăслăлăхпа çывăхлатас тĕллевпе йĕркеленĕ.

Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулне Атăлçи федераллă округĕн вун тăватă регионĕн чи лайăх çамрăк спортсменĕсем пуçтарăнчĕç.

Спартакиада уçăлнă кунхине ăмăртăва хутшăнакансене кĕтмен парне савăнтарчĕ – «çăлтăрпа зарядка тăвасси». Ăна спорт аэробикин аслă категорийĕн тренерĕ Ольга Журавлева ирттерчĕ. Çавăн пекех хăнасем Çĕнĕ Шупашкарти спорт тата пултарулăх коллективĕсене курса киленчĕç.

Кăçал финала Атăлçи федераллă округĕнчи ача çурчĕсенчен 300 ытла вĕренекен хутшăнчĕ. Вун виçĕ-вун сакăр çулсенчи ачасем мини-футбол, стритбаскет, волейбол, дартс, шашка, сĕтелçи теннис, ишев тата çăмăл атлетитка енĕпе тупăшрĕç.

Пĕтĕмĕшле ăмăртура Пермь облаçĕ виççĕмĕш вырăна тухрĕ, Пушкăрт Республики – иккĕмĕш, Мордва – пĕрремĕш. Çĕнтерÿçĕсене планшет парнелесе чысларĕç. Çавăн пекех мала тухнă кашни спортсмен диплома тата медале тивĕçрĕ.

Мордваран килнĕ Артем Квашиншăн телейĕн чикки çук, пур дисциплинăра та призерсен йышне лекнишĕн питĕ савăннă вăл. Çакăн пек ăмăртусем кашни çул иртни питĕ аван пулнине палăртрĕ. Чăваш Ене лайăх кĕтсе илнишĕн тав турĕ.

# «Выляса ярсан та кулянса ÿкмерĕç»



Командăсемшĕн сасăлакансем вара вĕсемпе пĕрле инçетрен килмен, Çĕнĕ Шупашкарти шкулсенчех вĕренеççĕ. 28-мĕш шкулти саккăрмĕш класс хĕр ачи Таня Николаева Чĕмпĕртен килнĕ çамрăк спортсменсене хавхалантарнă. Вĕсене валли çĕкленÿллĕ сăмахне мĕн чухлĕ шыранă тата! Паллах, ача çуртĕнче ÿсекенсене тăрăшулăхĕшĕн, йывăрлăхсем тухсан таттăлса ÿкмесĕр малтан мала талпăннишĕн кăштах та пулин савăнтарас килет.

17-мĕш шкулти 8 «б» класра вĕренекенсем те ытти регионтан килнĕ çамрăк спортсменсене хаваслă кăмăл парнеленĕ. Çак спартакиадăра вĕсем нумай тус-юлташ тупнă, малашнехи ăмăртусенче вара татах та тĕл пулĕçха.

Надя Яновăна Тутарстанран килнĕ ушкăн питĕ килĕшнĕ.

– Тутарсен çамрăк спортсменĕсем – питĕ хаваслăскерсем. Выляса ярсан та кулянса ÿкмерĕç. Пур япалара та ыррине курма хăнăхнă, – тĕлĕнет хĕр ача юнашар регионти тантăшĕсенчен. Вăл командăсемшĕн «чирлет» кăна мар, хăй те спортра çитĕнÿ тăвать.

Пилĕк çул каялла Надя теннисла тата шыв спорчĕпе хатĕрленнĕ. Шел, республикăра вĕсемпе анлăрах ĕçлеме май çук, çавăнпа хĕр ача та ку тĕссене пăрахнă. Халĕ Надя – волейболçă. Инга Вячеславовна Самушкова тренер патĕнче ăсталăхне туптать.

– Волейболла выляс шухăш-тĕллевпе тренировкăна пĕрремĕш хут пырсан мана тÿрех çак енĕпе чылайранпа хатĕрленекенсем хушшине тăратрĕç. Малтанах питĕ йывăрччĕ. Анчах команда мана сивлемерĕ, тренер та сĕнÿ-канашпа тăтăшах пулăшрĕ. Кашни асăрхаттарăва тĕпе хурса малашне çав йăнăшран асăрханма тăрăшрăм, – тет халĕ тĕп ушкăнра вылякан Надя. Чăваш Енри чемпионатра çĕнтернĕ хыççăн Козьмодемьянск тата Анат Кама хулисенче иртекен вăйăсене те хутшăннă вĕсен команди, малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Хамăр патра çитĕнÿ туса республика тулашĕнчи тантăшсемпе те вăй виçме пултарни вара малашне татах та хавхалантарать.

Наталья Гончарова пек пулма ĕмĕтленекен хĕр ача паллă волейболçă мечĕке епле хăватлă çапса kaçарнинчен, мĕн тери ăста вылянинчен тĕлĕнет, унран тĕслĕх илет.

– Аттепе анне манăн кашни çитĕнÿшĕн савăнаççĕ. Çĕнтереймесен вара ăнланаççĕ, хуçălса ÿкме памаççĕ, – тет Надя. Хăйĕншĕн çывăх çыннисем темĕн тума та хатĕррине ăнланакан хĕр ача çак кун Чĕмпĕр командишĕн сасăласа вĕсене чун ăшшипе хавхалантарма тăрăшрĕ. Кашни çыннăнах хăйне кам та пулин ырă суннине туяс килет. Çакна ача çуртĕнче ÿсекенсем те тивĕçлĕ.

# «Куракансен шутĕнче пирĕншĕн сасăлакансем пулни хавхалантарчĕ!»

Саратов облаçĕнчи Пугачев хулинчен килнĕ ушкăн çакăн пек ăмăртусене яланах хаваспа хутшăнать. Пĕлтĕр Саранскра та пулнă вĕсем, унти ăмăртусенче те палăрнă. Шупашкарта вара пĕрремĕш хут. Аякри хăнасене хула хăйĕн илемĕпе тÿрех тыткăнланă. Кунти вырăнсене мĕн тери килĕштернине ачасем пĕр-пĕрне пÿлсех каласа пачĕç. Çак спартакиадăна килнисенчен кашниех хăйĕн тăрăхĕнче чи маттуррисен ретне лекнĕ. Владимир Белоусов те сахал мар çитĕнÿ тунă. Яланах çĕнтерÿ патне ăнтăлать вăл. Спортра вара ку питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Анатолий Ермаков виççĕмĕш класра хăйĕн малтанхи спорт тупăшăвне хутшăннине аса илчĕ. Футбол тата сĕтелçи теннис енĕпе ăмăртнă ун чухне. Паян та спортăн çак тĕсĕсем ăна ыттисенчен ытларах илĕртеççĕ.

Ачасемпе пĕрле хореографĕ Е.В. Силантьева килнĕ. Сакăр çул çак ĕçпе аппаланакан ăста педагог командăна мĕнле кăтартса парасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланать, çавăнпа вĕсем çак утăма тĕплĕн хатĕрленĕ.

– Куракансен шутĕнче пирĕншĕн сасăлакансем пулни, вĕсем пире хавхалантарса кăшкăрни, ÿкерчĕксем çĕклени мĕн тери кăмăллăччĕ, – савăнăçне пĕлтерчĕ Е.В. Силантьева. – Чăвашсем, малашне те çак хаваслăха ан çухатăр!»

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Тен, вĕççе килĕ Кеша?



© Катя КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.

Кайăк-кĕшĕк сассине илтсен чун ыратать. Чимĕр-ха, мĕншĕн куляннине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартам.

Çуркунне кантăк умĕнчи йăмра çине кураксем йăва çавăрма тытăнчĕç. Хурамккасем кунĕпе ĕçлеççĕ. Картишре хĕвел ăшшинче киленекен ĕне хайхискерсенчен хăраса лупас айне кĕрсе таракан пулчĕ. Ара, кайăксем ун çине хăпарса лараççĕ те çăмне тăпăлтараççĕ кăна. Маруç тумла шывне тухса ĕçме шикленекен пулчĕ.

Чĕпĕ кăларчĕç кураксем. Пĕчĕккисем кунĕпе янăрашаççĕ. Аслисем апат та çитереççĕ ĕнтĕ. Асанне ялан вăрçать вĕсене.

– Çак йăмрана тепĕр çул аçуна кастаратăпах. Хурамккасем чăх чĕпписене авă епле сыхласа лараççĕ. Ямăт апат кĕтеççĕ вĕт. Хайсем усал пулман тăк никам та тарăхмĕччĕ, – тет янăрашса.

Хура шыв тăкма урама тухрăм. Симĕс курăк çинче курак чĕппи выртать. Çывăха пытăм, хăрамасть. Йĕркеллĕ утаймасть иккен. Алла илтĕм. Мĕн тумалла хайхискерпе? Йăвине хурас, йывăç çине хăпараймастăп. Кролик читлĕхне ятăм вара. Ара, малашне пуканепе вылямăп, ăна пăхса ÿстерĕп.

Асанне çитсе тăчĕ. Пĕчĕкскере курсан ятлаçма тытăнчĕ.

– Хамăра сăтăр тăвакана хĕрхенетĕн пулать! Кĕçех чĕпсем тухмалла. Вĕсене мĕнле сыхласа çитерĕпĕр? Халех кайса яр çырмана, амăшĕ шыраса тупатех ăна, – лăпланаймарĕ хайхискер ниепле.

– Асанне, аслисемшĕн ачисем айăплă мар-çке. Хăв ялан çапла çирĕплететĕн. Авă Митьăна шеллесе кашни кун сĕт кăсса паратăн. Унăн амăшĕ чунсăр. Тĕпренчĕкĕ пирки пачах та шухăшламасть. Хĕрхенетĕн çав арçын ачана. Эпĕ те курак чĕппине никама та памасăп! – парăнмарăм хам та.

Асанне урăх шарламарĕ. Аллине сулса пÿртелле кĕрсе кайрĕ. Эпĕ вара хыпаланса кĕреçе шыраса тупрăм та пахчана ăман кăларма васкарăм. Пĕчĕк савăт тулсан тусăма апатлантарма кĕтĕм. Çиме хăнăхрĕ. Шыв та ĕçтертĕм.

Çапла кун хыççăн кун сисĕнмесĕр иртрĕ. Пĕр кунхине килтисем лавккана вăйпа хăваларĕç.

– Укçа шутлама пĕлместĕп. Унта мана улталаççĕ, – кÿрентĕм самантрах.

Хутаç тыттарса кăларса ячĕç пĕрех. Варвари инке те çăкăр илме васкать иккен.

– Пире валли пĕремĕк туянса кил-ха, – тилмĕртĕм ăна.

Килĕшрĕ. Эпĕ вара савăнăçлăн картише чупса кĕтĕм те... калаçайми пултăм. Читлĕх умĕнче аппа тăрать. Чун сÿ! турĕ. Чупса пытăм. Шалта ман Кешăна кушак хăвалать. Муркăна ярса илсе хулăпа çаптартăм.

– Санăн хурамккуна пĕрех кăларса ямалла пулать. Икĕ эрнери кăвакал чĕпписене кураксем куç умĕнчех тапăнчĕç. Юрать хам çывăхрах пултăм, – сассине хăпартса калаçрĕ аппа.

– Кеша айăплă мар-çке, – тарăхрăм каллех.

– Вăл та ÿссен çавнашкалах пулать. Пуканесемпе выля-ха пĕрех хутчен.

Чун кÿтнипе макăрсах ятăм. Мĕншĕн килтисем тусăма çав тери кураймаççĕ?

Ĕнтĕ Кеша çитĕнчĕ. Пĕр кунхине читлĕхрен тухсан вĕççе тарчĕ. Чĕре çурăлса тухатчĕ! Сехетрен таврăнчĕ. Ман умах çитсе ларчĕ. Алла илтĕм хăвăртрах. Ачашларăм, çупăрларăм.

– Текех читлĕхре усрамăп. Ирĕкрех çÿре, – тесе çÿлелле вĕçтерме хăтлантăм.

Çук, ниçталла та каймарĕ вăл. Кĕçех чăхсемпе апатланма тытăнчĕ. Каллех таçтан асанне тупăнчĕ.

– Тырра сая яратпăр ĕнтĕ! Курака çитериччен тепĕр вунă чĕп туянатăп ыранах, – тесе кăмăлсăрланчĕ.

– Асанне, малашне выçă пурăнатăп. Хам çиес çăкăра ăна парăп, – терĕм тутана тăсса.

Вырсарни кун вунă чĕп тухрĕ. Асанне вĕсене саппун арки çине хурса пÿрте илсе кĕчĕ. Амăшĕ пĕчĕкскерсене пăхмасть имĕш.

Кашни кун асаннепе урамра сарăскерсене сыхлакан пултăмăр. Кеша вара пирĕнтен шит те юлмасть. Çывăхрах вĕççе çÿрет.

Акă пĕр кунхине Кĕтерне аппа çитрĕ те асаннепе иккĕшĕ халап çапма тытăнчĕç. Эпĕ вĕсене çăвар карса итлетĕп вĕт!

Чĕпсем çуйхашма тытăнсан вăрт! çавăрнса пăхрăмăр. Курак пĕр чĕппе йăтса çÿлелле çĕкленчĕ. Кеша хайхискерĕн çулне самантрах пÿлчĕ. Сарă чĕп вара симĕс курăк çине лаплатса ÿкрĕ. Асанне тĕлĕннипе пĕççине шарт! çапрĕ.

– Пирĕн Кеша епле ăслă! Маттур! – çапла ырларĕ пĕрремĕш хут асанне ман тусăма.

Хам та хĕпĕртерĕм. Çак пулăм хыççăн сарăскерсене Кеша сыхлакан пулчĕ. Çывăха кайăксене кăна мар, кушаксене те пыртармасть.

Асанне ăна ырласа пĕтерейместь вĕт! Лавккана кайсан та ăна валли чи тутлă япала туянакан пулчĕ. Кăлпассие шутсăр кăмăллать тусăм. Канфет-пĕремĕке те тиркемест. Ăна пурте юратнăран савăнса пĕтерейместĕп.

Кĕркунне. Пурте пахчара çĕр улми кăлараççĕ. Эпир те хĕллене хатĕрленетпĕр. Кеша та сатур, пахчара ăман пуçтарать.

– Лекрĕн-и алла! Тинех шалчу тулчĕ! Çулла çимĕççене эсирех пĕтертĕр. Путсĕрсем, – тенипе пуçа ялтах çĕклерĕм.

Кÿршĕ хĕрарăмĕ пĕр курака вĕлерне те ăна урам варринелле вăркăнтарчĕ. Чун сÿ! турĕ. Чим, ăçта Кеша? Çакăнтахчĕçке. Пирĕн Кешăна хайхискер хусăкĕпе çапса леш тĕнчене ăсатнă иккен.

– Ним айăпсăр чунпа мĕншĕн çапла хăтлантăн? – ĕсĕклерĕм тусăма хам çума пăчăртаса.

Çĕр улми кăларакан асанне пĕр хĕрелсе, пĕр шурса кайрĕ. Куçĕнчен куççуль шăпăртатрĕ.

Унтанпа икĕ уйăх иртрĕ. Алла пулин те чун ыратать. Тен, пĕррехинче Кеша вĕççе килмĕ-ши тесе халĕ те час-час кантăкран тинкеретĕп.

# Саламлама аттене парне пачĕ асанне

– Уяв ячĕпе! – тенипе вăрантăм.

Эй, аттене саламлаççĕ иккен. Мĕн ячĕпе – пĕлместĕп. Çĕнĕ хыпарпа паллашма хăпăл-хапăл вĕсем патне пырса тăтăм.

– Мĕн курак чĕппи пек пăхса тăратăн? Аçуна ырă сăмахсем кала. Чунне çемçетмелли, – терĕ асанне куçран тинкерсе.

– Сăлтавсăрах-и?

– Çуралнă кунĕ-çке унăн.

– Кун пирки мĕншĕн маларах асăрхаттармарăр? – кÿренсе мăкăртатрăм çав самантра.

Атте ĕçе кайрĕ. Каçчен мĕн хатĕрлемелле-ши ăна валли? Çапла шухăшланипе пуç та ыратакан пулчĕ. Пĕр-пĕр чаплă кĕпе илес, укçа çук. Ĕçлеместĕп вĕт. Хутран ăсталанă теттене килĕштерĕ-ши? Унран ытла мĕнех парнелеме пултарăп-ши?

Хачă шыратăп. Аран тупрăм. Таса хут та кирлĕ-ха. Ăçтан илем-ши? Авă çÿлĕк çинче аппасен мĕн чухлĕ тетрадь. Пĕрне илнĕшĕн мăкăртатмаççĕ пулĕ-ха. Хĕпĕртесе ĕçе пуçăнтăм. Йытă çури парнелĕх пултăр тесе мĕн чухлĕ хут вакламарăм пуль? Эпĕ шухăшланă пек пулмасть те, алăсем чĕтреме тытăнчĕç юлашкинчен. Апла пулин те теттене çилĕмпе çыпăçтарса пĕтерсе сĕтел çине лартса хутăм. Аякран хитре курăнать-ши тесе алăк патне чупса кайрăм. Аван. Тăратăп çапла хама хам мухтаса.

– Ну, Лисук, санран маттур ача çук та çĕр çинче, – терĕм хавхаланса.

Çав вăхăтра пÿрт алăкне такам хыттăн тĕртсе уçрĕ те кăмака хыçне кĕмсĕрт çеç кĕрсе ÿкрĕм. Сывлама манса кайрăм.

– Мĕн, çенĕкре çын утни илтĕнмест-им? Е çывăрса кайрăн. Йăтса тăратас пулĕ халĕ, – тесе Люда аппа çывăха пырса тăчĕ.

Диван çине ларсан ыратни йăлт иртрĕ.

– Аппа, кур-ха, атте валли епле илемлĕ парне хатĕрлерĕм, – тесе сĕтел еннелле тĕллесе кăтартрăм.

– Ку йытă нихăçан та пĕр кашăкран ытла апат çимен пулĕ? Ытла начар. Çил тавраш тухсан самантрах вĕççе каять. Асăрхан, – терĕ тетте çине чеен пăхса.

Унăн сăмахĕсене урăх итлес темерĕм, хачăпа çилĕмпе тата Джека йăтса асанне пÿлĕмне кĕрсе кайрăм. Вырăн çине тăсăлса выртрăм. Ара, кăмăла хусрĕç вĕт. Тĕрĕссипе, унăн сăмахĕсене ăша хывсан тахçанах чĕре çурăлса каймалла.

Кăнтăрла иртсе тăватă сехетре вăрантăм. Кĕçех атте ĕçрен таврăнмалла. Апла Джека курупкана вырнаçтармалла. Чим, ăçта манăн йытă? Тăрмашса ăсталарăм та, халĕ çухатрăм-и?

Макăртăм.

– Вырăн çинчен ÿкмерĕн пулĕ? – пырса тăчĕ ман ума картишрен кĕнĕ асанне.

Ĕсĕкле-ĕсĕкле мĕн пулса иртнине каласа патăм.

– Чим-ха, лаç кăмаки чĕртме сĕтел çинчен хаçатсем илсе тухрăм. Сан Джеку та пĕрле тухрĕ-ши вара? – кулянчĕ хайхискер. – Тепĕр тесен, мĕн пăшăрханатпăр-ха. Аçуна парнелĕх арчара кĕпе пур.

Тинех кăмăл çемçелчĕ. Йăл култăм. Асанне самантрах куççулĕме саппун вĕçĕпе шăлчĕ.

Каç пулсан пурте сĕтел тавралла вырнаçрăмăр. Аттене саламлама. Черет çитсен ăна илемлĕ кĕпе парнелерĕм. Çакна курсан аппа чавсаран тĕксе:

– Джеку пурăнаймасть тесе асăрхаттартăм вĕт. Итлемерĕн. Паян ăна какай çитернĕ пулсан, тен, атте курса ĕлкĕретчĕ хам-хама», – лĕх-лĕх кулчĕ шурă шăлĕсене кăтартса.

Кукăль чăмлаканскер чыхăнса кайрăм. Чарăнайми ÿсĕретĕп.

– Лисукăн парни килĕшрĕ. Ку кĕпене ялан тăхăнăп, – мухтанчĕ атте.

– Чимĕр, асанне ăçта пирĕн? – ялт сиксе тăчĕ аппа.



© Анна МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.

– Эпĕ кунтах-ха, – тесе кăштăртатса тухрĕ вăл хăй пÿлĕмĕнчен.

Асаннене курсан çухалса кайрăм. Мĕн пулнă унпа? Мĕншĕн пичĕ-куçĕ улшăннă?

– Ах, ачамсем, эсир çав крем таврашĕпе епле усă куратăр? Эпĕ те сирĕн пек хитре пулас терĕм те авă пит туртăнса ларчĕ, – ассăн сывларĕ вăл.

– Эккей, çилĕмпе сĕрнĕ эсĕ питне, хут çыпăçтармалли шĕвекпе, – ăнлантарчĕ аппа ун çине тинкернĕ май.

Ах, çилĕме аран сÿсе тасатса пĕтертĕмĕр. Айăпли вара – эпĕ. Джека çыпăçтарнă хыççăн çилĕме пуçтарма маннă...

Пур пĕрех уяв хаваслă иртрĕ. Асанне те, питне тасатнă хыççăн, пушшех хаваслă пулчĕ.

# Николай ТЕВЕТКЕЛ



* * *

Кĕрхи сăнсем халь куç тулли –
кăвакарать ав ял кÿлли.
Халь шур хурсен чипер çемйи
тек çÿремест çини-çими.

Епле сикеççĕ хум çинче
çавра тăп-тăп пĕсехисем.
Сас-чÿ каять инçе-инçе,
вĕçеççĕ хурăн çулçисем.

## Çил вĕçтерчĕ шурă утпала

Çил вĕçтерчĕ шурă утпала...
Йышлă симĕс çунатне сарса
хумханать çаранĕ те вăрманĕ.
Эй, çĕр-шыв! Эп ĕмĕр санпала
савăнăп е макăрăп ларса,
шухăшлăп, канашлăп, паттăрланăп.
Çитĕп эп шап-шур хурăнлăха,
тутлă çырлине татса киленĕп.
Çакăн пек илемлĕ сăнлăха
шухăшлă сăнпа пăхса çĕкленĕп.
Ÿкĕнĕп, пăлханăп, салхуланăп...
Эй, çĕр-шыв! Эс – ĕмĕр манпала!
Çил вĕçтерчĕ шурă утпала...
Çак çилрен юлнишĕн ма кулянăп?

## Кĕтне хĕрринче

Сас кайрĕ пăшăл-пăшăл
сĕм-сĕм вăрманĕнче.
Чÿхенчĕ ылтăн кăшăл
ирхи Кĕтне çинче.

Шывра халь ылтăн сăнлă
хĕвел питне çăвать.
Татах та капăр сăнлăх
шывра вăл хăварать.

Тен, çавăнпа хитре-тĕр
Кĕтне çинчи хумсем?
Хĕвел кулли питре те
çисет кунти çынсен.

Ман çутă хум пуласчĕ,
упрасчĕ кун тĕсне.
Ыр ĕçсемпе тухасчĕ
хам ĕмĕр тинĕсне.

## Чăрăш

Лăс чăрăш – ватă асатте
Ларать мăнаçлă пĕр çĕрте.
Хĕлле пулать-и е çулла –
Ялан вăл симĕс тумпала.

Пăхсан – салтак пек курăнать,
Пĕрмай вăл хуралта тăрать.
Ĕненмесен хăв килсе кур:
Ун айĕнче ăш хÿтлĕх пур!

## Пăшипе Шăши

Пĕчĕк турата Шăши
хуçрĕ ăнсăртран.
Илтнĕ, тет, çакна Пăши
инçетри сăртран.
Тапса сикнĕ чăтлăха
вăл сас-чÿсĕр шăплăха –
мыскара!
Шăширен тарать Пăши,
Пăширен хăрать Шăши –
мыскара!

## Вырмара

Шурăм пуçĕ шурă урхамахăн
кармашса хир урлă тем сăнать.
Çутă сывлăм – чечексен ахахĕ –
улăхра илемленсе çунать.

Çивĕч çил хăйне халь паттăрлатрĕ...
Сарлака çĕр-шывăн чĕрçинче
вăл тулли пучахсене ташлатрĕ –
ирĕклĕн вĕрет вăл çĕр çинче.

Кĕç тухса ÿкес пек йывăр пĕрчĕ
тинкерет пучах хăрпăкĕнчен.
Ак тавралăх çĕн шавпа халь хĕрчĕ –
хир пăхать комбайн куçĕнчен.

Уй-хирти комбайн – улăп хачă –
тикĕслет уй-хирĕн сар çÿçне.
Комбайнерĕ – çăлтăр куçлă каччă –
çăлтăрлатрĕ сарă хĕр куçне.

## Ирхи ÿкерчĕк

Çут тĕнчене илем кÿме çуралнăн
çак пĕчĕк хĕр ача йăл! кулчĕ пек.
Çĕр чунĕнчен нихçан та вăл çухалмĕ –
таса та шурă, пĕчĕкçĕ чечек.

Йĕри-тавра чĕвĕлтетсе вĕçеççĕ
çăп-çăмăл кайăксем. Тĕнче тимлет.
Пĕчĕкскере юрас пекех чĕкеçĕ
çуначĕпе кăшт сĕртĕнсе иртет.

Тем тĕрлĕ теттесем туртса кăларчĕ
тĕнче çак хĕр ачашăн тасалса.
Ыр кăмăллă кукамăшĕ пек ларчĕ
умне тирпейлĕн кукленсе, кулса.

## Асатте

Ак сĕм вăрман та кăвакарчĕ
сĕт пек шур пĕлĕт юххинче.
Кĕр кунĕ хăй сăнне хăварчĕ
шултра пан улмисем çинче.

Шавла-шавла шкула чупаççĕ
букварьлĕ пĕчĕк ачасем.
Тара ÿксе кукăрткалаççĕ
пĕрремĕш хут сас паллисем.

Тунсăхпала кĕтет аслашшĕ
мăнукĕсем таврăнасса.
Вăл, пĕчĕкскер, кампа туслашĕ?
Çурт юлчĕ тейĕн пушанса.

Вăл анлă уй-хире куçларĕ,
кăштăртатса тухать уя.
Хир анлăшне висме пуçларĕ
ун аллинчи юман туя.

Сăрт айккинче шавларĕç харăс
яш юмансем çил тухнăран.
Мăн сухалне шăлса кашларĕ
вĕсен аслашшĕ – ват юман.

* * *

Шур чарлансем шыва чул пек персе
анаççĕ,
шур çиçĕм пек çиççе илеççĕ хум çинче.
Каллех ак сывлăша çунатсемпе
касаççĕ,
сар лили чÿхенсе юлать шыв ункинче.

Унтах уланкăсем ăмăртмалла выляççĕ,
сикеççĕ сальто та çыран хĕррисенче.
Хĕп-хĕрлĕ çунатсем хĕмсем пек йăл!
хыпаççĕ
хĕвелĕн питĕнче, хăвалăх хушшинче.

Çĕн утă шăршипе сывлать умри утрав,
чĕнет пулăçсене вĕççе каяс пек хÿшĕ
хăва патаксенчен çатăрласа тытса.

Йăсăрланать вучах. Çилсем çĕкленĕ
шав.
Хумсем çыр хĕрринче ташлаççĕ те
пĕр хушă,
шыв кĕмĕл шăлсемпе кулать
ахăлтатса.

## Симĕс парăс

Тунсăхлăн шавлать лăс хурăн
Сарлака уйра.
Симĕс парăс пек сатуррăн
Чÿхенет умра.

Тен, вăл: «Хир курса килем», – тет
Хĕвелпе çиççе.
Илĕртет ăна илем те
Инçете чĕнсе.

Çавăнпа вăл симĕс-симĕс
Парăсне карать.
Чăрсăр çил – хăюллă кимĕç –
Хÿрине тытать.



## Мĕншĕн?

Мĕншĕн çак хур чĕпписем,
хур аçисем, хур амисем
е нарт! нарт! кăвакалсем,
кÿлĕре хыпаланса
шапасем шыракансем,
хĕл килессине манса
çаруран çÿреççĕ,
пурăнма пĕлмеççĕ.
Ав, епле кăркка аçи
çав тери мăнаçланса
сăмсине çĕклет.
Вăл çырусă тет хăйне,
каçăрскер анасласа
шухăша пÿлет.
Аптăрать, ав, куками те,
шур сухаллă кукаçи те
тĕрлĕ кайăк-кĕшĕкрен.
«Мĕншĕн-ши чăлха çыхмаççĕ
мĕскĕн кайăксем?
Хĕл сивви çинчен манаççĕ
çу çитсен вĕсем».




Юратуллăн килĕшсе
Пуçне сулчĕç те лешсем
Çаплипех утаççĕ,
çаплипех чупаççĕ
е ишеççĕ кÿлĕре:
«Кирлĕ мар чăлха пире!
Ăшă тум та кирлĕ мар.
Пирĕн тĕк çемçе те ăшă,
çил вĕрсен те вăшăл-вăшăл
сивĕрен вăл хÿтĕлет.
Те вăл кĕрĕк? Мур пĕлет», –
купăсне тăсса нарт!-нарт!
сасă пачĕ кăвакал.
Ал çупать ăна шарт!-шарт!
ват кăркка та – хамăр ял.
Вăл – çырусă, ăслă кайăк,
эп ăна ялан пуç тайăп.
Вăл пире хыпар тăвать:
– Пирĕн пур чăн-чăн хăват.
Çĕр çинче çунатлисем,
чăн-чăнах та ятлисем.
Çĕр çинче те тÿпере
эпир ĕмĕр хисепре.
Кирлĕ мар пире чăлха,
ăшă тум та кирлĕ мар.
Илттĕр тимлĕн тăм хăлха,
эпир тĕксĕр кайăк мар.

## Вĕрентекен

Шурă çÿçлĕ илемлĕ пикен
Кĕлетки яштака та чечен.
Ир-ирех вăл васкать шкулалла,
Çĕн пĕлÿ ун паян памалла.

Катаран шкул ачи хăпарать,
Йăл кулса çирĕп сывлăх сунать.
Хĕрĕн пичĕ хĕвеллĕн çисет,
Ăшă кулă ăна парнелет.

Хĕпĕртеççĕ хаваслă чунсем,
Малалла тинкереççĕ куçсем.
Ăс парса, вĕрентсе калани
Ĕмĕр юлĕ пуçра манăçми.

Ырă чунлă ăста педагог.
Кашни кун вăл пуçлать çĕн урок,
Час-часах тав сăмахĕ илтет.
Ашшĕ-амăш чунтан хисеплет.

*Роза ОСИПОВА (КОЛЬЦОВА).*
Шупашкар,
2-мĕш шкул.

Тантăш 7
38 №, 2014, авăн, 18

● "ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ!"

# Шăмăш пуласлăхĕ пур



Манăн кукаçи, Владислав Лаврентьевич Лаврентьев, ял историйĕпе питĕ интересленетчĕ. Калавĕсем хаçатра та пичетленетчĕç. Унпа пупленине халĕ те асра тытатăп-ха. Калавĕсене вуланă хыççăн вара Шăмăш ялĕ епле пуçланса кайни хама та кăсăклантарса ячĕ. Унăн историне пĕлмелле кăна мар, вăл манăçа ан тухтăр тесе ăна хут çине çырса хăвармалла.

Пирĕн ял Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хушшинче вырнаçнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче вăл питех аталанман, çĕнĕ çурт лартакан та пулман. Мĕншĕн тесен ăна хулапа пĕрлештерме шухăшланă. Паянхи кун вара ял аталанать, унăн пуласлăхĕ пур, çĕнĕ çуртсем те ÿсеççĕ.

Шăмăш илемлĕ вырăнта, айлăмра вырнаçнă. Юнашарах Федераллă Вятка аслă çул иртет. Ял варринче Кăкшăм шывĕ юхса выртать.

Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, ял ячĕ çыннăннипе çыхăннă. Мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра касси (ял, урам) формăпа вĕçленекен ял ячĕсем чăвашра нумай. Шăмăш миçемĕш ĕмĕрте йĕркеленсе кайнине никама та татăклăн калаймасть. Архиври документсем кунта вун çиччĕмĕш ĕмĕрте Булдышев пурăнни çинчен калаççĕ. Вăл Çĕньялпа Типçырма (Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕ) ял хушшинчи çĕрсене 1781 çулччен тытса тăнă. Булдышев хуçа патĕнче Чемурш ятлă çын ĕçлесе пурăннă. Вăл вĕреннĕскер пулнă, çыру ĕçĕсене туса пынă. Чемурш юманран пÿрт тунă (çав вырăнта халĕ пирĕн ял ларать). Ун хыççăн татах çуртсем ÿснĕ кунта. Вара вăл пĕчĕк яла Писарино ят панă. Мĕншĕн тесен пĕрремĕш çуртне Чемурш çыруçă лартнă-çке. Тĕпчевçĕсем калană тăрăх, Писарино ялĕ 1605 çулччен пуçланса кайнă. Каярахпа ял çыннисем кунта часовня туса лартнă. 1851 çулта вара ун вырăнне йывăç чиркÿ хăпартнă. 1880 çулта чиркÿ çумĕнче шкул та уçăлнă. Кун хыççăн ял ячĕ улшăннă. Писарино вырăнне Чирĕклĕ Шăмăш тенĕ. 1935 çулта çак чиркÿ хупăннă. Халĕ кунта Православи приххучĕ ĕçлет. 2013 çулта ăна Варнава митрополичĕ сăвапларĕ.

Чăваш тĕпчевçи В.Нестеров калану тăрăх, Шăмăш ялĕн çĕрĕсем 1781 çулччен Булдышев хуçа аллинче пулнă, унтан Теньяков хуçа патне куçнă. Шăмăш ялĕнче çав вăхăтра чăвашсемпе пĕрле тутарсем те пурăннă. Теньяков хуçа питĕ усал пулнă, Шăмăшсене хĕсĕрленĕ, çавăнпа нумайăшĕ туха-туха тарнă. Тутарсем – хăйсен енне, чăвашсем – урăх çĕре. Ял пĕчĕкленсе, начарланса юлнă. Çавăнпа ăна Начар Шăмăш тесе чĕнме пуçланă.

Ял тăватă çырма хушшинче вырнаçнă. Кăнтăр енче тарăн çырма пур. Халăхра ăна Çăва çырми теççĕ. Ĕлĕк-авал çак вырăнта кивĕ çăва ларнă, унта ар çынсене çеç пытарнă. Кунта вара Иван патша тата Емельян Пугачев салтакĕсен вил тăприйĕсем сыхланса юлнă. Мĕншĕн тесен паянхи шкул ĕлĕкхи чиркÿ вырăнĕнче ларать, юнашар вара тахçан çăва пулнă. Çырмапа пĕрлех вил тăприйĕсем те ишĕлсе пĕтнĕ. Анчах çурхи ĕçсен вăхăтĕнче шкул ачисем кунта халĕ те ĕлĕкхи укçасем (1552, 1553, 1774), çын шăммисем тупаççĕ.

Шăмăш ялĕнчен пĕр-икĕ çухрăмра Атăл шывĕ юхса выртать. Çав енчех тата Вильăх çырми пур. Кунти çынсен пурнăçĕ ĕлĕкавалах Атăл шывĕпе çыхăннă. Вĕсем унта утă тунă, сунара çÿренĕ, вăрман каснă, карап тумалли йывăçсене тĕп хулана янă.

Паянхи кун Шăмăш ялĕ çĕнелсе те хитреленсе пырать. Ĕлĕкхи чиркÿ вырăнне çĕннине туса лартрĕç. Юнашарах çĕнĕ шкул, икĕ лавкка, ваттисен çурчĕ, медпункт вырнаçнă. Вăрçăра пуç хунă салтаксене чысласа лартнă палăк та пур. Шкул ачисем ăна тасатса та тирпейлесе тăраççĕ. Ял варринчи кÿлĕ хĕрринче клуб вырнаçнă. Кил хуçалăхĕсем 130-тан иртрĕç. Çамрăксем те çемье çавăрса ялтах тĕпленеççĕ. Кунта пурăнмалли условисем çителĕклĕ. Çĕнĕ Шупашкара уй урлă çуран çÿретпĕр. Шупашкара та инçех мар. Вăй питти ар çынсемпе хĕрарăмсем хулана ĕçлеме çÿреççĕ. Ялти усă сывлăш тата илемлĕ тавралăх такама та илĕртĕ. Хула çыннисем те кунтах туртăнаççĕ. Çавăнпа çулла та, хĕлле те ялта пурнăç кĕрлесе кăна тăрать.

Шăмăш ялĕнчен тухнă паллă çын нумай. Ахальтен мар «Чăвашьен» хаçат пирĕн яла учительсен ялĕ тенĕччĕ. Чăнах та, пирĕн тăрăхран нумай вĕрентекен тухнă. Ытти пултаруллă та чаплă çын çинчен те каламаллах: Михаил Егорович Егоров – пейзаж ăсти, ÿнерçĕ; Валерий Семенович Семенов – медицина ăслăлăхĕсен докторĕ, хирург; Дмитрий Гаврилович Крылов – педагогика наукисен докторĕ, профессор; Николай Степанович Степанов – педагогика наукисен кандидачĕ, доцент.

Пирĕн ялăн илемлĕ вырăнĕсене Михаил Егоров ÿнерçĕ хăйĕн ĕçĕсенче питĕ лайăх кăтартса панă. Эпир те хамăр яла юрататпăр, вăл таса та хитре пултăр тесе кашни çуркунне йывăç лартатпăр, мĕншĕн тесен таврара çырма нумай.

Шăмăш ялĕн пуласлăхĕ пурах.

***Юля ФОМИНА, 7 класс.***
Шупашкар районĕ,
Шăмăш шкулĕ.

# Уçырма вучахĕ сÿнмест

Хăçан тата мĕнле пуçланнă-ха Уçырма? Халăхра сыхланса юлнă халап тăрăх Уçырма ялне никĕсленĕ чăвашсем 400 çул каялла Вырăскас Пикшихпе Энтриялĕнчен килнĕ-мĕн. Ку акă мĕнле пулнă.

Хусан ханлăхне çĕнтернĕ хыççăн Иван ĕмпÿ унти çĕрсене кнеçсемпе воеводăсене валеçсе парать. Вырăнти халăх, вăл шутра чăвашсем те, çĕрсĕр юлать. Çапла Куславкка районне кĕрекен Ырашпулăх, Пишкасси ялĕсенчи хресченсем 1565 çулта Пикших, Челле, Мертен, Шăнкăр тата ытти те çĕнĕ çĕр шыраса хальхи Вырăскас Пикших патне пырса тухаççĕ. Унта çĕр пÿртсем туса пурăнма пуçлаççĕ. Ял ятне хăйсен аслă юлташĕн ячĕпе Пикших тесе хураççĕ, вырăнне вара Аслă ыр (Аслыр) теççĕ. Çак сĕм вăрман уçланкинчи çырмара çăл куç юхса выртнă, сывăхрах кÿлĕ вырнаçнă. Пурăна киле ялти çын шучĕ ÿссе пынипе тыр-пул çитĕнтермелли çĕрсем тăвăрланса пынă. Вăрман хăртса, кăкласа сухаламалли çĕр туса пăхнă. Анчах ку ĕç çав тери тертлĕ пулнă. Каллех çĕнĕрен çĕрсем шырама тивнĕ.

1645 çулта Пипук ятлă чăвашăн курăк çиме кăкарнă вăкăрĕ вĕренне татса Пикшихрен кăнтăр хĕвелтухăç еннелле утса кайнă. Пипук выльăх йĕррисемпе йĕрлесе пынă. Çакна каласа хăвармалла: вăл вăхăтра ку тăрăхра сĕм вăрман кашласа ларнă. Хальхи Канаш хули вырăнĕнче шурлăх пулнă. Çапла вăрман тăрăх 7-8 çухрăм кайсан Пипук хăйĕн вăкăрне пысăк уçланкăра, шăнкăртатса юхакан çăл куç çывăхĕнче курать. Вырăнĕ вара ăна çав тери килĕшсе каять: йĕри-тавра йывăç, çывăхра – тăп-тăрă Окрис юхан шыв.

Тепĕр çулхине Пипук, Сепер, Тяпук çемйисем çак уçланкăра çĕр сухаласа тырă акаççĕ, майĕпен кил-çурт та çавăраççĕ. Пипук урапа-çуна хатĕрлеме ăста пулнă, Тяпук катка-пичке тума пĕлнĕ. Вĕсем çăл куç патĕнчи вырăна малтанхи пекех Аслыр теме тытăнаççĕ. Ял ятне Уйри çырмари Кĕçĕн Пикшихе Уйçырма, кĕскетсе – Уçырма теççĕ. Вырăсла – Малые Бикшихи.

Ял ячĕ çинчен калакан тепĕр халап та пур. Пипук хăй вăкăрне шыраса тупнă вырăна пăхса çаврăнать те çапла калать: «У-у-у, çырмисем!» Çавăнтан Уçырма теме пуçланă иккен.

Малтан лартнă çуртсем пурте çырмасен хĕрринче пулнă. Паян кун та кашни çырма çумĕнче урамсем пур.

Уçырмари Аслыр çăл куçĕ халĕ те сыхланса юлнă. Унăн шывĕ тĕлĕнмелле тутлă та сиплĕ. Ялта пурăнакансем кăна мар, Канаш хулинчен те ăна илме килеççĕ. Администраци тăрăшнипе, уйрăм çынсем пулăшнипе халĕ çак вырăнта часовня лартнă. Йĕри-тавра йывăçсем, тĕмсем. Тĕрлĕ кайăк юрри чуна çĕклентерет. Пурне те усă кÿрекен, савăнтаракан илемлĕ вырăн вăл.

Ял пуçлансан çĕр çултан Уçырма çыннисене Христос тĕнне йышăнтарса шыва кĕртнĕ. Ачасене тĕне кĕртмешкĕн (хальхи ветеринари пункчĕ вырăнĕнче) ятарлă часовня та хăпартнă. Ваттисем калану тăрăх, 1746 çулта çуралнă Пипук Иванне чи малтан шыва кĕртнĕ. Унăн мăн аслашшĕ Пипук Пикшихрен Уçырмана чи малтан куçса килнĕ, ашшĕ вара пуян та сумлă çын пулнă.

Ун хыççăн 3 çулти Нишка ятлă ывăл ачана илсе пынă. Пупĕ: «Ку ачана мĕнле чĕнетĕр?» – тесе ыйтнă. Ашшĕ: «Нишка», – тенĕ. Пуп ачана каткана чиксе кăларнă та: «Халĕ Николай пулать», – тенĕ. Çак çын халĕ пурăнакан Вăрăм Çтенкки Колин йăх тĕпĕ пулнă. Ăна хут çине Николай тесе çырнă пулин те ял хушшинче Нишка тенĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн ял чăннипех те пысăк. 800 килтен тăраканскер çулсерен сарăлса пырать. Канаш хули çумĕнче вырнаçнă май кашни çул çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем ÿссе лараççĕ, урамсем йĕркеленеççĕ. Çамрăксем те нумай пурăнаççĕ кунта. Ял варринче икĕ хутлă пысăк шкул, ача сачĕ, культура çурчĕ, врач офисĕ, почта уйрăмĕ, ял администрацийĕн çурчĕ вырнаçнă. Асфальт çул та сарнă. Çын шучĕ те çулсерен ÿсет. Манăн шухăшпа, Уçырма ялĕн пуласлăхĕ пур. Иккĕленмесĕрех калама пултаратăп: сутă малашлăх кĕтет ăна.

Тăван ял историне çырса хăвараканĕ вăрçă ветеранĕ, хисеплĕ пенсионер Петр Петрович Петров пулнă. Вăл кирлĕ материал пухас тĕллевпе архив хучĕсене нумай тишкернĕ.

«Асаттесен сасси» алăпа çырнă кĕнекене Петр Петрович пирĕн шкула парнеленĕ.

***Таня КУЗЬМИНА.***
Канаш районĕ,
Уçырма.

# Паттăрлăх

# Валя Зенкина — пĕчĕк санитарка



Валентина Ивановна Зенкина Брест крепоçне хÿтĕленĕ çĕре хастар хутшăннă, фашист тыткăнне те çакланнă. Тыткăнран пур пĕрех тарнă вăл, партизан отрядне кĕрсе фашистсене хирĕç çапăçнă. Вăрçăран чĕрĕ-сывă çăлăнса юлнă. Çапăçусен вăхăтĕнче вара çак пĕчĕк те черченкĕ хĕр ача аслисене хăюлăхĕпе тата паттăрлăхĕпе тĕлĕнтернĕ. Çавăншăнах ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе чысланă.

### Вăрçă

Вальăн ашшĕ, Иван Иванович Зенкин, Брест крепоçĕнчи стрелоксен 333-мĕш полкĕн старшини пулнă.

1941 çулхи çу уйăхĕнче хĕр ача хăйĕн вун тăваттăмĕш çуралнă кунне паллă турĕ. Çĕртме уйăхĕн вуннăмĕшĕнче вара савăнăçлăскер амăшне çиччĕмĕш класа ăнăçлă вĕçленĕ ятпа илнĕ Мухтав хучĕ кăтартрĕ.

Икĕ эрне иртрĕ. Ăшă каç. Валя килте кĕнеке вуласа ларать. Акă хăй те сисеймерĕ, тем вăхăтра çывăрса кайрĕ. Питĕ вăйлă кĕмсĕртетнĕ сасă пулнăран вăранчĕ вăл. Тăшман тискерлĕхне Брест крепоçĕ чи малтан туйса илчĕ. 333-мĕш полк казармисем çунаççĕ. Çулăм чĕлхисем телеграф юписене çавăрса илчĕç. Йывăççем çурта пек çунаççĕ. Хĕр ачан ашшĕ хăвăрт-хăвăрт тăхăнчĕ, амăшне хыттăн ыталарĕ, Вальăна чуп турĕ те пÿлĕмрен хыпаланса тухрĕ. Çав вăхăтрах хăй кăшкăрса хăварчĕ:

– Халех путвала анăр!.. Вăрçă!..

Вăл – салтак. Унăн вырăнĕ çар çыннисем, крепоçе хÿтĕлекенсем патĕнче. Çак кунтанпа Валя ашшĕне тек курман. Брест крепоçĕн хÿтĕлевçисенчен чылайăшĕ пекех вăл паттăррăн пуçне хунă.

### «Ан тĕкĕнĕр, вăл аманнă вĕт-ха!»

Кăнтăрла хĕрарăмсемпе ачасен ушкăнне нимĕçсем тыткăна илчĕç. Вальăпа амăшĕ те çав йышрах. Фашист салтакĕсем вĕсене Муховец шывĕ хĕрне хăваласа кайрĕç. Суранланнă хĕрарăм ăнсăртран тĕшĕрĕлсе анчĕ те самăр фельдфебель (нимĕç командирĕн пулăшуçи) ăна винтовка приклачĕпе хĕнеме пуçларĕ.

– Ан тĕкĕнĕр ăна, вăл аманнă вĕт-ха! – ăнсăртран кăшкăрса ячĕ те Валя амăшĕн аллинчен вĕçерĕнчĕ.

Фашист фельдфебелĕ хĕр ачан аллисене пăрчĕ, Брест крепоçĕ çине кăтартса темĕн кăшкăрчĕ. Анчах Валя нимĕн те ăнланмарĕ. Çакна курса тăракан куçаруçă сăмах илчĕ:

– Фельдфебель господинăн сана çакăншăн персе вĕлермелле. Анчах вăл ун пек хăтланмасть, пурнăç парнелет. Санăн вара крепоçе кайса совет салтакĕсене парăнма каламалла. Халех! Эсĕ хушнине пурнăçламасан пурте пĕтĕç...

### «Эпĕ хăраса тăмăп...»

Фашистсем хĕр ачана хапха патне çавăтса кайрĕç, хул пуççирен тĕксе картише кĕртсе ячĕç. Унта вара йĕритаврах çулăм алхасать, мина е граната çурăлать, пульăсем çумăр пек тăкăнаççĕ. Крепость хÿтĕлевçисем хĕр ачана асăрхарĕç.

– Çулăма чарăр! – хушу пачĕ командир. Пограничниксем Вальăна путвала илсе кĕчĕç. Пĕр вăхăт вăл нимĕн те калаçаймарĕ, ыйтусем çине хуравлаймарĕ, салтаксем çине пăхса хумханнипе тата савăннипе макăрчĕ çеç. Кайран вара кăштах лăпланчĕ те амăшĕ çинчен, фашистсем пĕчĕк ачасене Муховец шывĕ хĕррине хăваласа çÿрени, аманнă хĕрарăма прикладпа хĕнени тата татăклă хушу лартни пирки каласа пачĕ.

– Ан парăнăр! – тархасларĕ Валя. – Вĕсем пирĕннисене вĕлереççĕ, тăрăхлаççĕ...

Хĕр ача фашистсем халăха мĕнле асаплантарнине, вĕсен епле хĕç-пăшал пуррине, ăçта вырнаçнине йăлтах ăнлантарчĕ, партизансене пулăшма юлчĕ.

Çак каç хаяр çапăçу иртрĕ. Пограничниксен хăюлăхĕ Вальăна хăйĕн шиклĕх туйăмĕ çинчен мантарчĕ. Вăл командир патне пычĕ те:

– Лейтенант юлташ, аманнисен суранĕсене çыхмалла. Ирĕк парăр-ха мана, – терĕ.

– Эсĕ пултараятăн-и? Хăрамастăн та-и?

Валя шăппăн çеç хуравларĕ:

– Çук, эпĕ хăраса тăмăп.





### Ача хул пуççийĕ пулăшнипе

...Пĕррехинче госпитале юлташсене курма пырсан Вальăна асăрхарăм. Ытти хĕрарăмсемпе пĕрле пионерка аманнисене пăхатчĕ. Ăна пурте кăмăллаççĕ, май пур таран упрама тăрăшаççĕ. Пирĕнтен кашниех çак пĕчĕк санитаркăпа юлашки çăкăрне пайлама хатĕрччĕ.

Вăрçăн çиччĕмĕш кунне эпĕ те суранланасран сыхланса ĕлкĕреймерĕм. Юлташсем мана çурма ишĕлнĕ госпиталь-путвала çĕклесе çитерчĕç. Каллех Вальăна тĕл пултăм. Паянхи пекех ас тăватăп. Йывăр куç хупанкисене аран-аран уçрăм та ман умра пĕчĕк хĕр ача тăнине куртăм. Вăл, çаврăнăçуллăскер, манăн сурана çыхать.

– Тавах, Валя!

Стенасен ишĕлчĕкĕсем витĕр вара тискерленсе çитнĕ фашистсен сассисем илтĕнеççĕ: тапăнаççĕ. Хĕç-пăшал тытма пултаракансем пурте çапăçăва тухма хатĕрленчĕç, çав шутра хĕрарăмсем те. Эпĕ тăма хăтлантăм, анчах сулланнипе кăшт çеç ÿкеймерĕм. Валя хул пуççийĕпе пулăшма тытăнчĕ:

– Манран тĕрĕнĕр, эпĕ чăтăп...

Çапăçу вырăнне ача хул пуççийĕ çумне тĕрĕне-тĕрĕне çитрĕм.

Унтанпа нумай çул иртрĕ. Пĕррехинче Валя çинчен хыпар илтрĕм. Вăл Пинск хулинче пурăннă иккен. Ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе чысланă. Икĕ ача çуратса ÿстернĕскер тахçанах Валя мар ĕнтĕ – Валентина Ивановна Зенкина. Пирĕншĕн вара, Брест крепоçне хÿтĕлекенсемшĕн, вăл ĕмĕрлĕхех Валя, Валя-пионерка пулса юлĕ...

**С.БОБРЕНОК.**

### Вăрçă тамăк евĕр

Килчĕ вăрçă хĕрĕх пĕрремĕш çулта,
Килчĕ те аркатрĕ пĕтĕм çурта.
Пĕтрĕç уйсем те хирсем, улăхсем,
Акă пуçланчĕç инкеклĕ кунсем.

Вăрçă тамăк евĕр туйăнать –
Эх, мĕн чухлĕ çын асапланать.
Вăл текех ан пултăр нихăçан.
Турă, упрасам пире ялан!

*Оксана ЛЕОНТЬЕВА.*

Канаш,
3-мĕш шкул.

### Ватă асатте

Манăн ватă асатте
Пулнă вăрçăра тахçан.
Çĕр-шыва хÿтĕлесе
Çитнĕ вăл Мускав таран.

Тыткăнра та асапланнă,
Пур пĕрех тарма пултарнă
Çав хăрушă инкекрен,
Пит усал нимĕçсенчен.

Асаттене юрататăп,
Ун пекех пулма шутлатăп.
Тăнăçлăхшăн кар тăрар,
Ырă кăмăллă пулар!

*Алина ДЕНИСОВА.*

Канаш районĕ,
Энтрияль.

Тантăш
38 №, 2014, авăн, 18



# Пирĕн Петюк сăпкара ăшă-ăшă ыйхăра...

Каç енне пĕтĕм ĕç-пуçа вĕçлесен асаннепе анне хитре тум-юм тăхăнчĕç. Тĕкĕр умĕнче çаврăнкаланă хыççăн хутаçне тăвата кукăльпе пысăк çăкăр, хăярпа помидор тата ытти кучченеç чикрĕç. Нимĕн те ăнланмастăп. Тавралăх тĕттĕмленсе килет, вĕсем пур таçта кайма хатĕрленеççĕ. Пуканепе выляканскер, чăтаймарăм, анне патне вирхĕнтĕм.

– Эсир сарайĕнче кăштăртатнă чухне хапха алăкне сăлăп хурса кĕтĕм. Капла каçа хирĕç ăçта хыпаланатăр? – кăсăклантăм тĕлĕнсе.

– Кирук куккусем патне ача çума каятпăр, час таврăнаймăпăр, – тутăрне тӳрлетсе çыхнă май пуплерĕ асанне.

– Ак тата! Манпа пĕр кунта çуралнă Санюк хăй тĕллĕн мунчара çăвăнаймасть-и? Ан култарăр-ха! Эпĕ те, вăл та ултăра вĕт. Эсир вара мана çапла пĕрре те иртĕнтерместĕр, – терĕм капланса килнĕ куççулĕме çăтса.

Тутана тăсса кăмака хыçне тапса сикрĕм. Çак вăхăтра Санюка ăмсантăм.

– Анне, асанне, эсир мана мар, Санюка юрататăр иккен! – тесе хыттăн кăшкăртăм та лĕр! макăрса ятăм. – Вĕсен килĕнче ахаль те нумайăн пурăнаççĕ, пĕртен пĕр ачине хăйсем пăхаймаççĕ-им? Капла Санюк иртĕнсе ӳсет, хăйне мăнна хума тытăнать акă, курса тăрăр! Кирлĕ тĕк мана та паллами пулать.

– Эсĕ, ачам, калаçас тесех калаçса ларатăн-и çапла? Санюкăн шăллĕ çуралнă, çавна çума каятпăр, – терĕ анне ман çине тĕлĕнсе пăхса.

– Вара... Çуралтăрах. Ăна мĕншĕн сирĕн çумалла? Унăн ашшĕпе-амăшĕ пур вĕт, – çаплах мăкăртатрăм ниепле лăпланаймасăр.

Асанне мана йăтса илчĕ те чăпăрт чуптуса илчĕ.

– Сана урăххипе ылмаштармастпăр, ан хăра. Эпир сана çеç юрататпăр. Çав пепкене мунчара çăвăнтармастпăр эпир, ăна ĕлĕкхи йăлана асра тытса парне панă май ырлăхлă-сывлăхлă çитĕнме пил парса хăварăпăр. Çакна «ача çуни» теççĕ, мăнукăм, – ăнлантарчĕ вăл.

Йăлăнсан-йăлăнсан мана пĕрле илме кăмăл турĕç. Чăнах, Санюксем патне чылай çын пухăннă. Пурте нумай пулмасть çут тĕнчене килнĕ пепкене сывлăх сунчĕç. Уйрăмах асанне пилĕ пурне те килĕшрĕ.

– Пирĕн Петюк сăпкара,
Ăшă-ăшă ыйхăра.
Ыйăхĕнче сĕт куртăр,
Тĕлĕкĕнче çу куртăр,
Çупа сĕтпе çăвăнтăр,
Маттур мăнă яш пултăр,
У-у-ух! У-у-ух!

Чăтаймарăм, асаннен хăлхинчен пăшăлтатрăм.

– Эпĕ çуралсан та эсĕ çапла пил панă-и мана? – ыйтрăм кăсăкланса.

– Кунран вăйлăраххине каларăм, мăнукăм.

Унăн сăмахĕсем çунатлантарчĕç. Апла пулсан мана аннепе асанне чăнахах юратаççĕ.



Çак сехетре,
Çак минутра,
Çак çеккунтра
Çак таврари шăплăхра
Шăпчăк çуралать.
Шăп пулăр!



Чĕвĕ-чĕвĕл çерçисем
Хӳме çумне сăрăннă.
Çакă ялăн ачисем
Хĕрсен çумне сăрăннă.



Сарри-сарри саррипе,
Хури-хури хурипе,
Тимĕр карта туллипе
И эс чипер, эп чипер,
Чăн чиперри çак ачи!



Ай-хай ача Ванюк пур,
Çав Анюка юратать.
Юратать, юратать,
Чăнахах та юратать.

*Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Виктор Драгунский

# Атă тăхăннă кушак аçи



– Ачасем! Сире çак вĕренӳ чĕрĕкне лайăх вĕçленĕ ятпа саламлатăп! – терĕ Раиса Ивановна. – Халĕ канма та пултаратăр. Каникулта вара эпир шкулта карнавал йĕркелесшĕн. Унта хутшăнма тĕрлĕ костюм тăхăнмалла. Чи лайăххишĕн парне парăпăр. Хатĕрленĕр! – вăл тетрадьсене пуçтарчĕ те пирĕнпе сыв пуллашса класран тухрĕ.

Ку хыпар пурне те савăнтарчĕ. Эпир те Мишăпа питĕ хĕпĕртерĕмĕр, часрах килелле чупрăмăр.

– Эпĕ уявра гномик пулатăп! Ĕнер аттепе анне мана çумăрпа йĕпенесрен сыхлакан плащ илсе пачĕç! Çавна тăхăнăп та – чăн-чăн гномик пекех курăнăп. Пите мĕнпе те пулин хупламалла-ха тата, – терĕ тусăм савăнăçне пытараймасăр. – Эсĕ вара кам пулатăн?

– Курăпăр-ха унта, – хуравларăм ăна.

Киле çитсен ку хыпар пуçран тухсах ӳкрĕ. Анне вунă кунлăха санаторие каймалла терĕ те... Мана хама лайăх тытма, аттене итлеме хушрĕ. Тата тем те пĕр каларĕ. Ас туса та юлаймарăм. Тепĕр кунне эпĕ ыйхăран тăнă çĕре вăл çукчĕ ĕнтĕ. Аннене кашни кун кĕтрĕм, календарьте кунсене чĕрсе пытăм. Унсăр питех те кичем-çке мана.

Пĕр кунхине пирĕн пата Миша çитрĕ. Хăй хашкать, васкавнă пулас.

– Эсĕ пыратăн-и е çук-и? – терĕ вăл алăкран кĕнĕ-кĕмен.

– Ăçта? – ыйтрăм ним ăнланмасăр.

– Ан йĕкĕлтеш-ха. Шкула каймалла! Паян пирĕн уяв вĕт! Куратăн-и эпĕ гномик тумĕпе килнине? – ниçта кайса кĕрейми калаçрĕ тусăм.

Чăнах та! Çумăртан сыхланмалли плащне тăхăннă иккен Миша. Эпĕ уяв пирки мансах кайнă!

## «Шăна кăмпи» е «ватă пулăç»?

– Манăн костюм çук, анне те санаторире, – терĕм ĕнсене хыçса.

– Атя хамăрах мĕн те пулин шухăшласа кăларатпăр! Ну, килĕнте тĕлĕнтермĕшрех япаласем пур-и? Çавна тăхăнатăн та – карнавал валли костюм пулать те.

– Аттен пулла çӳремелли вăрăм аттисĕр пуçне урăх нимĕн те çук, – аса илтĕм эпĕ.

– Тăхăн-ха ăна! Пăхăпăр мĕнлерех вăл! – терĕ Миша хыпаланса.

Атта урари пушмака хывмасăрах тăхăнтăм, пур пĕрех пысăк. Кунчин вăрăмăшĕ чутах хул айне çитмест. Çӳреме те меллĕ мар. Ку темех марха. Хăнăхсан – пулать. Хăйсем тата йăлтăртатаççĕ. Мишăна килĕшрĕ пулмалла.

– Халĕ пуçна тăхăнмалли тупмалла, – терĕ.

– Аннен сарлака улăм шлепкине илсен?

– Тăхăн часрах! – васкатрĕ Миша пĕр вырăнта тăра пĕлмесĕр.

Шкап тăрринчи шлепкене илсе пуç çине вырнаçтартăм. Вăл та мана пысăкрах – малалла шуса анса куçа та, сăмсана та хуплать. Тен, чечеклĕ пулнипе-ши, пире килĕшрĕ вăл.

– Костюмĕ аптрамасть. Ятне мĕнлине парар-ши? – самантлăха шухăша путрĕ Миша. Пĕрре манăн шлепке çине, тепре атă çине пăхапăха илчĕ.

– Тен, «шăна кăмпи»? – ыйтрăм шлепкене çамка çине хăпартнă май.

– Мĕскер?! Шăна кăмписен шлепки хĕрлĕ-çке! Эсĕ ку костюмпа «ватă пулăç» пек курăнатăн, – кула-кула калаçрĕ Миша.

– Ну, каларăн та! «Ватă пулăç»! Апла тăк, сухал ăçта манăн? – терĕм тусăма хирĕçлесе.

## «Хӳре тĕк хӳр-е-е!»

Миша каллех шухăша путрĕ. Эпĕ вара коридора тухрăм. Кӳршĕ Вера Сергеевна та унтах. Мана курсан вăл:

– Ай-уй! Юмахри атă тăхăннă кушак аçи пекех эсĕ! – терĕ кăмăллăн. Вара тинех хамăн костюм мĕне сăнланине ăнлантăм. Эпĕ – «Атă тăхăннă кушак аçи». Вăт. Анчах манăн хӳре çук-çке. Ăна тата ăçтан тупас?

– Вера Сергеевна, сирĕн ăнсăртран хӳре çук-и? – терĕм кӳршĕ çине ыйтуллăн пăхса.

– Эпĕ шуйттан çури пек курăнмастăп пуль те… – терĕ вăл кударах.

– Паллах çук! Ку костюмпа юмахри кушак аçи евĕр терĕр-çке! Вĕсем хӳресĕр пулмаççĕ вĕт. Мана та мĕнле те пулсан хӳре кирлĕ!

Вера Сергеевна:

– Тăхта кăштах, – терĕ те хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ. Темиçе минутран сарă-хĕрлĕ тĕслĕ, хура пăнчăллă хӳре йăтса тухрĕ.

– Акă тыт, – терĕ. – Ку – тилĕ çухинчен юлнăскер. Çухи хăй тахçанах юрăхсăра тухрĕ, хӳри çеç юлчĕ.

Эпĕ ăна тав турăм та Мишăна кăтартма вĕçтертĕм.

Вăл хӳрене курсанах хавхаланчĕ.

– Часрах йĕппе çип пар-ха! Çĕлесе хуратăп, – ăшталанчĕ васкатса.

Ĕçе пуçăнчĕ те хайхискер. Малтан лайăххах пулса пычĕ-ха. Кайран кĕтмен çĕртен йĕппипе тирсе илсен кăшкăрсах ятăм.

– Ай-уй! Епле ыраттарчĕ! Асăрханарах эсĕ унта! – терĕм питкуçа пĕркелентерсе.

– Темех мар, ыратни иртет, – текелесе каллех тирсе илчĕ мана.

– Тимлĕрех пул! Унсăрăн хăлха чикки лекет!

– Эпĕ паян пĕрремĕш хут алла йĕппе çип тытрăм-çке, – тет хайхи.

Кăштахран ĕç вĕçленчĕ.

– Урра! Пулчĕ те! Вăт ку хӳре тĕк хӳре-е-е! Пур кушак та ун пеккипе мухтанаймасть ахăртнех, – аллисене кăмăллăн сăтăркаларĕ Миша.

Хыççăн аннен куç хăрпăкĕсене сăрламалли тушĕпе пит çăмарти çине икĕ енчен те вăрăм мăйăхсем ӳкертĕм. Кашни енче виçĕ йăрăм.

Вара тинех шкула кайрăмăр. Ачасем йышлăн пухăннă. Пурте хитре костюмсемпе. Чи нумайăи – «гномиксемччĕ». Пĕр аллă çын та пурччĕ пуль. «Юр пĕрчи» те чылай. Эпир савăнтăмăр, ташларăмăр, юрларăмăр. Кĕвĕпе хусканнă чухне манăн шлепке куç çинех анса ларатчĕ, вăрăм атă вара халь-халь ӳкерес пек тăтăшах такăнтаратчĕ.

## Парнене кам тивĕç?

Кĕвĕ шăплансан сцена çине пирĕн вожатăй Люся тухрĕ те янăравлă сассипе çапла каларĕ:

– «Атă тăхăннă кушак аçине» кунта тухма ыйтатпăр! Вăл чи лайăх костюмшăн пĕрремĕш парнене тивĕçрĕ!

Эпĕ сцена çине хăпартăм. Юлашки картлашка çинче пысăк атта пула каллех такăнтăм та чутах ӳкмерĕм. Пурте кулса ячĕç. Люся манăн алла чăмăртаса саламларĕ те икĕ кĕнеке тыттарчĕ – «Дядя Степа» тата «Сказки-загадки». Вара Борис Сергеевич, музыка учителĕ, кĕвĕ калама пуçларĕ. Эпĕ сцена çинчен аннă чухне тепре такăнтăм. Каллех пурте ахăлтатса кулчĕç.

Уяв вĕçленсен Мишăпа килелле утрăмăр.

– Эсĕ мĕншĕн çĕнтерни паллă ĕнтĕ! – терĕ вăл кĕтмен çĕртен. – Гномиксем нумайччĕ унта, кушак вара – пĕрре.

– Ăхă. Анчах эсĕ вĕсенчен пуринчен те кулăшларах курăнаттăн. Сана та кĕнеке памалла. Иккĕшĕнчен пĕрне суйласа ил-ха, акă, – тăсрăм ун еннелле алăри парнене.

– Мĕскер эсĕ! Кирлĕ мар нимĕн те.

– Хăшĕ ытларах килĕшет çавна ил.

– Апла – «Дядя Степа».

Тусăма парне тыттартăм. Вăл вара савăнăçлăн йăл кулчĕ.

Киле çитсен йăлăхтарса çитернĕ атта хывса кĕтессе петĕм. Календаре алла илсе паянхи куна чĕртĕм. Нумай шухăшламасăр ыранхи куна та хуратрăм. Пăхрăм та – анне килесси виçĕ кун çеç юлать! Вара хаваслă кăмăлпа çывăрма выртрăм.

*Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.*

# «Талантсене аталанма пулăшмалла»

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа кашни шкулта линейка иртрĕ. Шупашкарти ятарлă 1-мĕш шкул вĕренекенĕсем те учительсемпе ашшĕ-амăшне юрăсемпе савăнтарчĕç. Хăшĕ-пĕрисем аллисемпе тĕрлĕ хускану туса кăтартрĕç.

Шкул директорĕ пурне те çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа саламларĕ. Çак пĕлӳ çуртĕнчен вĕренсе тухакансенчен чылайăшĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсенче те пĕлӳ илнине, тĕрлĕ профессире вăй хунине палăртрĕ. Хăшĕ-пĕри Мускаври аслă шкулсенче ăс пухать. Акă Артем Карпов Бауман ячĕллĕ институт, Паша Сахаров ӳнер училищине вĕренсе пĕтернĕ. Пĕрремĕшĕ бадминтон выляссипе Раççей чемпионĕ ята та тивĕçнĕ. Паша хăйĕн профессийĕпех ĕçлет, тĕп хуларса ӳнерçĕре тăрăшать. Дима Кудряшов – Олимп вăййисен чемпионĕ, халăхсен хушшинче алă вăйĕ виçессипе тупăшса çĕнтерӳçĕ пулнă.

– Кунта талантлă ача нумай. Вĕсене вăхăтĕнче асăрхаса аталанма çеç пулăшмалла, – терĕ шкул директорĕ сăмахне вĕçленĕ май.

Çамрăксене классене чĕнсе шăнкăрав янăрарĕ. Эпĕ те тăххăрмĕш класс вĕренекенĕсемпе пӳлĕме кĕтĕм. Класс ертӳçи, Надежда Александровна Филаротова ачасене уроксен расписанийĕпе паллаштарчĕ. Мĕнле предметсем хутшăннине каларĕ. Ку çултан пуçласа шкулта электрон дневниксемпе тата журналпа усă курассине пĕлтерчĕ. Тăххăрмĕшсен вара пулас профессие суйлама вăхăт. Тепĕр çул экзаменсем тытма тивет вĕсен.

Кун хыççăн Надежда Александровна Чăваш Ен тата Раççей гербĕ, гимнĕ, палăксем пирки каласа пачĕ. Ачасем ăна тимлĕн итлерĕç. Ыйтусене хуравларĕç. Чăваш халăхне çутта кăларакан И. Я. Яковлев çинчен те чылай каларĕ вăл. «Çитĕнекен ăрăвăн тăван енĕн паллă çыннисене ачаранах пĕлмелле», – тет Надежда Александровна.

***Нина ГРЕЧКО,***
***писатель, журналист.***

# Кам айăплă?

Çуркунне. Юр ирĕлсе пĕтнĕпе пĕрех. Шыв кĕрлесе юхать. Пĕр пĕлĕт татки те çук. Çӳлте, тӳпере сарă хĕвел йăл кулать. Самаях хĕртет вăл. Çуркуннене пулăшасшăн тейĕн. Çулла пулнă тăк симĕс курăк çине выртса тӳпенелле тинкерĕттĕн е кĕнеке вулăттăн, анчах курăк симĕсленме мар, çĕр те типме ĕлкĕреймен-ха.

Ванюш урампа утса пырать. Йĕритавралла пăхкалать. Пăкăян ялĕнче пӳртсем пĕринчен пĕри чаплă. Ăна хирĕç Кĕркури мучи пырать ав. Вăрăм сухаллăскер аллине туя тытнă. Тепĕр аллинче – хутаç. Вăл пĕччене пурăнать, кичем ан пултăр тесе пĕр сурăх усрать. Урамра уçăлса çӳреме кăмăллаканскер хальхинче те майĕпен утать.

– Ванюш! Кил-ха, ут-ха часрах, – йыхăрчĕ арçын ачана ватă.

– Мĕн пулчĕ, мучи? – чупса çитрĕ ун патне хайхи.

– Сана пĕр ĕç хушасшăн-ха эпĕ. Çак хутаçра кирлĕ хутсем, документсем. Вĕсене Тарăнвар ялне Нинук аппуна леçсе параймăн-ши? Ыран валли кирлĕ ăна çаксем. Хам кайăттăмччĕ те анчах инçе утмалла, ура ыратать-çке. Ну, мĕнле, мăнукăм, пурнăçлаятăн-и çак ĕçе?

– Паллах! Киле кĕрсе аннене каласа хăварам, унсăрăн çухатĕ тата мана.

Ванюш килне чупрĕ. Мучи малалла утрĕ. Арçын ача пӳрте кĕрсен амăшĕ вырăн çинче выртнине курчĕ.

– Анне, анне мĕн пулчĕ? Каллех чĕрӳ ыратать-и? Тен, тухтăра кайса чĕнес? – пăшăрханса ӳкрĕ вăл.

– Кайса кил-ха, ачам, – терĕ амăшĕ вăйсăр сасăпа.

Арçын ача урама васкаса тухрĕ, аллинчи хутаçне те пĕрлех илчĕ. Хапхаран чупса тухнă чух Алика пырса çапăнчĕ. Вăл Ванюшпа пĕр класрах вĕренет. Пуçтахланать, пуçне те каçăртма пултарать тепĕр чух. Халĕ те ав, тӳрех хирĕçме тăчĕ.

– Эсĕ мĕн? Асăрханса çӳреме пĕлместĕн-им? Ку хутаçпа ăçта каятăн?

Ванюш сывлăш çавăрса ячĕ те Алика куçĕнчен тинкерчĕ.

– Итле-ха, Алик, пĕр ĕç пур, – терĕ. – Ку документсене Тарăнварти Нинук аппана кайса памалла. Леçсе пар-ха,



тархасшăн!

– Хăв мĕншĕн каймастăн?

– Анне чирлерĕ. Тухтăр патне чупатăп. Унсăрăн хамах кӳршĕ яла çитсе килеттĕмччĕ.

– Ну, юрĕ апла пулсан.

– Сăмах пар леçетĕп тесе.

– Сăмах паратăп! – терĕ Алик ĕнентерсе.

Ванюш çĕлĕкне тӳрлетрĕ те малалла чупрĕ. Алик çула тухрĕ. Виçĕ çухрăм утмалла Тарăнвара. Арçын ача лапталла вылякан юлташĕсене тĕл пулчĕ. Вĕсем ăна чĕнчĕç. Алик пĕрре аллинчи хутаçĕ, тепре юлташĕсем çине пăха-пăха илчĕ те:

– Мĕншĕн выляс мар, – терĕ. – Документсене каярах та леçме пулать-çке. Хутаçа тĕм айне хучĕ те ыттисем патне чупрĕ. Тĕттĕмленичченех пулчĕ вăл урамра. Хĕвел вăрман хыçне анса пытансан тин килне кĕчĕ.

...Ванюшпа амăшĕ кăмăллăн калаçса лараççĕ. Тухтăр килсе укол тунă хыççăн вăл хăйне лайăхрах туйма пуçларĕ.

Кĕтмен çĕртен алăкран шаккарĕç.

– Ман килес, – сывлăх сунчĕ Кĕркури мучи. – Ванюш, эсĕ Тарăнвара кайса килтĕн-и? Нинук хĕрĕм документсене ыранах хулана илсе каймалла тенĕччĕ... Вăхăтра леçмесен кая юлмĕши тесе пăшăрханатăп. Нимĕн те каламарĕ-и сана вăл?

– Э-э, мучи, ан кулян. Йăлтах йĕркеллĕ. Эпĕ хутаça Алика леçме хушăччĕ. Вăл сăмах пачĕ.

– Кама? – шартах сикрĕ ватă. – Ара, вăл каçченех урамра вылярĕ-çке! Хăш вăхăтра кӳршĕ яла çитсе килме ĕлкĕрнĕ-ши вара? Мĕншĕн хăвах каймарăн?

– Анне чĕрепе аптăрарĕ, мучи. Тухтăр патне чупма тиврĕ. Кайран та унпа пĕрлех пултăм. Часах Алик патне кайса йăлтах пĕлсе килетĕп!

Ванюш пиншакне уртса пӳртрен тухрĕ. Хапхаран тухсанах çумăр çуса ячĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ – вăл каялла таврăнчĕ. Хăй йĕп-йĕпе. Пĕр аллинче çурăлнă-вараланнă хут листисем, тепринче – хутаç...

– Ай-уй, ку манăн хутаç вĕт... – шурса кайрĕ мучи.

Ванюш ват çынна лăплантарасшăн пулчĕ.

– Халĕ хĕрĕмĕн куçĕнчен епле пăхас? Эх, апăрша ачисем... – терĕ тарăхса.

– Алик çапла хăтланасса пĕлмен эпĕ. Унсăрăн хушнă ĕçе ăна шанмăттăм, – ассăн сывларĕ Ванюш.

Кĕркури мучи документсене илчĕ те сыв пуллашмасăрах пӳртрен тухрĕ...

***Люба ИВАНОВА.***
Йĕпреç районĕ,
Пăкăян.

# Пахчари хăна

Вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Çу кунĕсем çитрĕç. Кашни çул Владик кукамăшне пахчара пулăшать: çум çумлать, йăрансене шăварать. Акă паян та хĕвел ансан купăста шăварма тухрĕ. Йăран патне çитрĕ те кукамăшне чĕнчĕ: «Кукамай! Кунта темĕн ларать! Ман çине пăхать!» – кăшкăрчĕ вăл.

Чăнах та, хурлăхан тĕмми çинче пысăк куçĕсемпе унталла-кунталла пăхкаласа тăмана чĕппи ларать иккен. «Мĕншĕн вăл вĕçсе каймасть? Пирĕнтен хăрамасть-ши?» – ыйтрĕ Владик çывăх çыннинчен. Вăл вара ăна тăмана ăçта пурăннине, мĕнпе апатланнине каласа пачĕ.

Пахчаран инçех мар пĕчĕк вăрман пур. Çавăнта тăманасем йăва çавăрнă, чĕпсем кăларнă. Акă ăçтан лекнĕ кунта кĕтмен хăна. Анчах мĕншĕн вăл вĕçсе каймасть-ха? Çак ыйтăва та хуравларĕ кукамăшĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем кăнтăрла нимĕн те курмаççĕ иккен. «Амăшне вара мĕнле тупĕ вăл?» – пăшăрханчĕ Владик. «Сассинчен палласа илет вăл ăна», – ăнлантарчĕ ватă. Мăнукĕ хăлхине тăратса тавралăха тимлеме тытăнчĕ. Илтĕнмест-ши тăмана сасси? Чăнах та, самантран ытти кайăк чĕвĕлтетĕвĕнчен урăхларах сасă хăлхине кĕчĕ. Апла тăк чĕппи амăшне тупатех. Çак кун Владик тĕттĕм пуличченех пахчара пулчĕ. Тăмана чĕппине пăхса киленчĕ.

Ирхине тăрсанах вăл анкартине чупса тухрĕ. Анчах чĕппе ниçта та тупаймарĕ. Владик кулянмарĕ. Вăрманта тăмана чĕпписем шиплетнине илтсен савăнăçлăн килнелле утрĕ.

***Ксюша ГУРЬЕВА.***
Шупашкар районĕ,
Шăмăш.



*© **Даша МИХАЙЛОВА** (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.*

# Хĕле хатĕрленер-и?

Вăхăтĕнче пуçтарса кĕнĕ пахча çимĕçе сая ярар мар. Хĕл кунĕсенче çиме вĕсенчен тем те хатĕрлеме май пур-çке.



## Консервланă кишĕрпе хĕрлĕ кăшман

**Ку çимĕçе янтăлама 2 килограмм хĕрлĕ кăшман, 1 килограмм кишĕр, çавăн чухлех пылак пăрăçпа пуçлă сухан, 100 грамм сахăр, 250 миллилитр 9 процентлă уксус тата тип çу, кăштах тăвар илĕр.**

Пур çимĕçе те лайăх çуса тасатăр. Варринчен уйăрнă пăрăçа улăм пĕрчи евĕр çинçен, сухана тăваткăл-тăваткăл туса вĕтĕ турăр. Хуппинчен тасатнă кăшманпа кишĕре теркăпа хырăр. Пĕтĕмпех эмаль витнĕ кастрюле ярса пĕчĕк çулăм çине лартăр. Сахăрпа уксуса уйрăм савăта ярса газ çине лартăр. Вĕреме кĕрсен çимĕçсем пиçекен кастрюле хушăр. Лайăх пăтратăр. Салата пĕчĕк çулăм çинче 1 сехет пек вĕретĕр. Стерилизациленĕ савăта ярса хупкăчпа хуплăр. Кайран тĕпне çÿлелле туса çавăрса хурăр.

## Терн (кăвак çырла) варенийĕ



**2 килограмм çурă терн, 1 литр шыв, 3 килограмм сахăр кирлĕ пулать.**

Лайăх çунă çырлана эмальпе витнĕ савăтра 1 литр шыв хушса 20-25 минут пĕçермелле. Çемçелнĕ çимĕçе дуршлага хурса шывне сăрăхтармалла. Сивĕнсен вăрринчен уйăрмалла.

Каллех шыва ямалла, сахăр хушмалла. Вăл ирĕличчен пăтратмалла. Ун хыççăн тата 10-15 минут вĕретмелле. Хатĕр варение стерилизациленĕ кĕленчене тултарса лайăх хупламалла.

## Кабачок салачĕ

**Салат валли 1 килограмм помидорпа пылак пăрăç, 3 килограмм кабачок, 150 грамм сухан, 200 грамм тип çупа сахăр, 4 апат кашăкĕ тăвар, 100 грамм уксус кирлĕ.**

Помидора аш арманĕпе авăртатпăр, пăрăçа вăрринчен тасатса тăрăхла туратпăр. Ватă кабачоксене хуппипе вăрринчен уйăрса, çамрăккисене çаплипех тăваткăл-тăваткăл ваклатпăр. Сухана вĕтететпĕр.

Помидора савăта ярса çулăм çине лартатпăр. Вĕреме кĕрсен ытти çимĕçе, тип çу, тăвар тата сахăр хушатпăр. Кастрюле хуплатпăр та пĕчĕклетнĕ çулăм çинче 30 минут пек пăшăхлатпăр. Унтан уксус ярса тата 10 минут тытатпăр.

Хатĕр салата стерилизациленĕ савăта тултарса лайăх хуплатпăр.

## Помидорпа тата пăрăçпа хатĕрленĕ салат

**4 килограмм хĕрлĕ пылак пăрăç, çавăн чухлех симĕс помидор, 2 килограмм пуçлă сухан, çур стакан тăварпа сахăр, 1 чей кашăкĕ вĕтетнĕ хура пăрăçпа уксус илмелле.**

Вăрринчен тасатнă пăрăçа улăм пĕрчи евĕр вакламалла. Помидорпа сухана çавракан касмалла. Тăвар, сахăр, пăрăç тата уксус хушса пăтратмалла. Унтан çимĕçсене кĕленчене пусарса тултармалла та 100 градус таран вĕрилентернĕ шывра стерилизацилемелле. Хупкăчпа хупламалла.

## Хĕрлĕ хурлăхан варенийĕ



**Çимĕçе хатĕрлеме 1 килограмм хĕрлĕ хурлăханпа çавăн чухлех сахăр, çур стакан шыв кирлĕ.**

Сахăрпа шыва савăта ярса çулăм çине лартатпăр. Унтан лайăх çуса тасатнă хурлăхан хушатпăр. Савăта кăштах силлетпĕр. Вĕреме кĕнĕ хыççăн 20 минут тытатпăр та стерилизациленĕ кĕленчене яратпăр. Хатĕр çимĕçе ванилин та хушма пултаратăр.

## Çупа маринадланă купăста

**Çимĕçе хатĕрлеме 2-3 килограмм купăста, 1-2 кишĕр, 3 ыхра шăлĕ, 5-6 лавр çулçи, 1 чей кашăкĕ вĕтетнĕ хĕрлĕ пăрăç илĕр. Маринад валли 1 литр шыв, 1 стакан тип çу, 2 кашăк уксус, çур стакан сахăр, 2 кашăк тăвар кирлĕ.**

Купăстана тăваткăллаcа, кишĕре çурма çавракан касăр, ыхрана вĕтетĕр. Пĕтĕмпех пăтратăр та пăрăç хушăр. Хыççăн савăта пусарса тултарăр. Купăста сийĕсем хушшине лавр çулçи хурăр.

Сахăрпа тăвар янă шыва вĕреме кĕртĕр те çулăма сÿнтерĕр. Тип çупа уксус хушăр. Вĕри рассола çимĕç тултарнă савăта ярăр, хупкăчпа хупласа сивĕниччен тытăр. Унтан сивĕтмĕшре пĕр талăк лартăр.

# Пите тасататпăр

**Пите пÿрлешкесем тухса тарăхтараççĕ-и? Çак пăтăрмахран хăтăлма халăх мелĕпе хатĕрленĕ маскăсем туса пăхма сĕнетпĕр.**



•Пĕр стакан вĕренĕ шыва 1 чей кашăкĕ чухлĕ сахăр тата апат соди хушса пăтратăр. Пулнă хатĕрпе мамăка йĕпетсе пÿрлешкеллĕ тĕлсене сăтăрăр. Унтан сивĕрех шывпа, супăньпе (хуçалăх супăнĕ пулсан лайăхрах) çăвăнăр. Лосьонпа сăтăрнă тĕлсене услам çу сĕрĕр. Ку ÿте хĕрелме памĕ. 1 сехетрен пите шывпа чÿхĕр.

•Шурă тĕслĕ (тĕрлĕ е çутă тĕслисем юрамаççĕ) пастăпа кашни пÿрлешкене сĕрĕр те типиччен тытăр.

•Шатраллă пите шăнăр курăкĕн сĕткенĕпе кунне темиçе хут сăтăрсан усăллă.

•Хăмла çырлин çулçисене лайăх çăвăр та вĕренĕ шыва чÿхĕр. Унтан сĕткенне пăрса илĕр те ăна услам çупа хутăштарăр. Вăл крем еврĕрлĕ пулмалла. Çак хатĕрпе çывăрма выртас умĕн пÿрлешкесене сĕрмелле.

Хура пăнчăсенчен хăтăлма вара çак маскăпа усă курăр: 1 çăмарта шуррине 2 чей кашăкĕ чухлĕ лимон тата алоэ сĕткенĕпе хутăштарăр. Лайăх пăтратăр. Маскăн çур пайĕпе хура пăнчăсене сĕрĕр. Типиччен тытăр. Унтан юлнă пайне сĕрĕр. 10-15 минут иртсен сивĕрех шывпа çăвăр.

## Сĕнÿ

**Тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçе пурнăçланă чухне çак сĕнÿсене шута илĕр:**

°Алăсем «Момент» çилĕмпе вараланcан вĕсене маргаринпа сĕрмелле. Темиçе минут тытмалла та çумалла.

°Тĕксĕм сăранран çĕлетнĕ сумкăна лимон сĕткенĕпе йĕпетнĕ мамăкпа сăтăрсан вăл унчченхи пекех йăлтăртатĕ.

°Тумтир чĕрне сăрлакан лакпа вараланчĕ-и? Çав тĕле краççынпа е бензинпа йĕпетнĕ салфеткăпа лайăх сăтăрăр.

°Шурă тĕслĕ тумтире ацетонпа йĕпетнĕ губкăпа тасатмалла. Ăна вараланнă тĕле хурса 5-10 минут тытмалла. Унтан сăтăрмалла.

°Алăри пулă е сухан шăршинчен хăтăлма ăна кăштах шăл тасатакан паста хушнă шывпа çăвăр.

°Савăт-сапаран пулă шăрши ан кĕтĕр тесен тăварлă сивĕ шывпа çумалла.

°Пÿртре шăшисем пур пулсан кашни кĕтесе вĕтетнĕ хура пăрăç сапăр. Унăн шăрши чĕр чунсене пистерĕ.

# Куç хăрпăкĕсем тăкăнсан



Куç хăрпăкĕсем ытла çÿхелнин, тăкăнма пуçланин сăлтавĕ темиçе. Чи анлă сарăлнисем – тĕрĕс мар апатланни тата мĕнле те пулин япăх пулăма тÿссе ирттерни.

Çавна май куç хăрпăкĕсене çирĕплетекен, ÿсме пулăшакан маскăсемпе усă курма сĕнетпĕр. Вĕсене килте те хатĕрлеме пулать.

Маскăсем ытларах чухне тĕрлĕ çуран тăраççĕ. Кастор, сырлан тата куршанак çăвĕсемпе анлăн усă кураççĕ.

Куçа сăрламалли кивĕ тушь флаконĕпе кисточкине лайăх çăвăр та çÿлерех асăннă çуран пĕрне ярса хурăр. Унпа кашни каç çывăрма выртас умĕн куç хăрпăкĕсене сĕрĕр.

Темиçе тумлам кастор тата куршанак çăвĕсене хутăштарăр. Пулнă хатĕрпе куç хăрпăкĕсемпе куç харшисене сăтăрăр. Çак маска вĕсене ÿсме пулăшĕ.

Эмел курăкĕсене вĕретнĕ шывпа усă курсан та аван. Салтак тÿмипе утмăл турата пĕçернĕ шывпа мамăк татăкне йĕпетĕр. Куç хупанки çине хурса 10-15 минут тытăр. Ку маска-компресс ывăннă куçсене кантарма пулăшĕ, куç хăрпăкĕсене çирĕплетĕ.

Пĕçернĕ хура чей хутаçĕсене ăшălла куç çине хурăр. 5-7 минут тытăр. Çак процедурăна 10 кун тăвăр.

10 тумлам куршанак çуне 2-3 тумлам алоэ сĕткенĕпе хутăштарăр. Шĕвеке куç хупанкине сĕрĕр.

Çак маскăсене асăрханса тумалла. Вĕсене куçа кĕртме юраманнине асра тытăр!

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*